ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

50 (4412) №, 2014, декабрь /раштав/, 11
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Кашни сăмахĕ – ахах пĕрчи



**Муркаш районĕнчи Исетеркка ялĕнче çуралса ӳснĕ Ангелина Иосифовна Белова мĕн пĕчĕкрен вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ. Çавăнпа юлташĕсемпе час-час шкулла вылянă. Хăш чух педагог вырăнĕнче пулса ачасене диктант çыртарнă, задачăсемпе уравненисем шутлаттарнă.**

Пĕлӳ çуртĕнче пĕрремĕш хут чăваш чĕлхи урокĕ иртнине паянхи кун та хавхаланса аса илет хастар учитель.

– Шăнкăрав янăрарĕ те класа вĕрентекен кĕрсе тăчĕ. Надежда Алексеевна Дмитриева çепĕç чĕлхипе çĕнĕ тема ăнлантарни çав тери кăмăла кайрĕ. «Чăнах, эпĕ те педагог профессине алла илетĕпех!» – тесе çирĕппĕн шухăшларăм ун чухне, – тет учитель.

...Паян Ангелина Иосифовна Сосновка шкулĕнче вăй хурать. Кунта 28 çул кĕçĕн классене вĕрентет вăл. Паян вара пĕрремĕшсемпе виççĕмĕшсене ăс парать хастар педагог.

– «Тетте» журнала питĕ юрататпăр эпир. Унпа урокра та усă куратпăр. Пĕтĕм хавхаланупа страницăсене уçса унта мĕн пуррипе паллашатпăр. Малашне хамăр та журналпа тачă çыхăну тытасшăн. Сăвă-калав çырма, ӳкерме юратакансем редакци валли хулăн конверт хатĕрлес тĕллевлĕ. Ара, вĕсем те хăйсен ĕçĕсене «Теттере» курасшăн-çке, – тет ачасене чунтан юратакан Ангелина Иосифовна.

Шăпăрлансем хисеплеççĕ класс ертӳçине. Акă малти парта хушшинче ларакан Даша Петрова та хăйĕн юратнă педагогĕ пек хастар пулма ĕмĕтленет.

– Пĕрремĕшĕнче çеç пулин те, халех пысăк çын пулас тĕллевпе хăпартланатăп. Кашни урокрах Ангелина Иосифовна вĕрентсе каланă ырă сăмахсене ăша хыватăп, – мăнаçланать хĕрача хавассăн. – Ӳссен, тен, художник пулăп-и, тен, писатель е поэт?

Украинăран куçса килнĕ Диана Радченко та хаваслă. Килĕшет ăна Чăваш Ен. Халĕ ĕнтĕ унăн тус-юлташ кăна мар, хаклă вĕрентекенĕ те, Ангелина Иосифовна, пур.

– Хамăр класс ачисене пурне те юрататăп. Туслă пулма вара пире Ангелина Иосифовна вĕрентет. Вăлах аслисемпе ваттисене хисеплеме, кĕçĕннисене пулăшма ăс парать. Унăн кашни сăмахĕ пирĕншĕн – ахах пĕрчи, – тет хĕрача пĕтĕм кăмăлтан.

– Çĕнĕрен çуралсан та – паян та çак профессиех суйланă пулăттăм, – çирĕплетет хăй сăмахне кĕçĕн классене вĕрентекен Ангелина Иосифовна.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Муркаш районĕ,
Сосновка шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

*ÇЫРĂНТАРУ – 2015*

**Декабрĕн 15-мĕшĕччен эсир, хаклă тусăмăрсем, «Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те 2015 çулăн пĕрремĕш çурри валли йӳнĕ хакпа çырăнма пултаратăр.**

**Аслă юлташăмăрсем! Ачăрсемпе мăнукăрсем валли «Тантăш» хаçат, «Тетте», «Самант» журналсем çырăнсамăр! Вĕсем те хăйсен юратнă кăларăмĕсене вуласшăн пулнине ан манăр!**

| Кăларăмсем | Индекс | 2015 çулăн пĕрремĕш çурринче илсе тăма çырăнтаракан хаçат-журнал хакĕсем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче. Раштавăн 5-15-мĕшĕсенче | Почта уйрăмĕсенче. Декада хыççăн | Почта уйрăмĕсенче. Декада вăхăтĕнчи экономи | «Чăваш пичечĕ» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | ВД800 | 645 | 732,66 | -87,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | В8353 | 264,66 | 304,08 | -39,42 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | ВД804 | 307,86 | 358,08 | -50,22 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 278,46 | 325,08 | -46,62 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 176,46 | 205,02 | -28,56 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 176,46 | 184,04 | -7,58 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 327,54 | 376,62 | -49,08 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–Кил | В3887 | 176,46 | 184,08 | -7,62 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 267,36 | 319,08 | -51,72 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 155,7 | 185,04 | -29,34 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | В3429 | 116,32 | 140,36 | -24,04 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 253,86 | 298,08 | -44,22 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | В4847 | 612,24 | 743,58 | -131,34 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 237,66 | 274,08 | -36,42 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 150,9 | 181,02 | -30,12 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 120,18 | 143,52 | -23,34 | 114 | 111 | 90 |

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

ШКУЛ ПРОГРАММИНЧЕН

## «Чĕлĕм туртнин мĕн усси пур?..»

*(Н.В.Шупуççыннин «Чĕлĕм» сăвви тăрăх)*

Николай Васильевич Шупуççынни (Васильев) XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш литератури историйĕнче палăрнă поэт. Вăл ку тапхăрти чăваш поэзине «Хитре Чĕкеç» сăвăлла юмах, «Янтрак янравĕ», «Пĕтелмей», «Вĕри çĕлен» поэмăсем тата ытти хайлавсем çырса кĕнĕ.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренни, литература кружокне çÿрени, К.В.Ивановпа пĕрле вĕренсе тата ĕçлесе пурăнни Шупуççыннине тĕрлĕ енлĕ аталанма май панă. Çыравçă хăйĕн хайлавĕсенче, уйрăмах «Тăлăх» сăввинче, «Пĕтелмей» поэминче, «Чăпта çапакансен юрринче», социаллă пурнăçăн тÿнтер енĕсене, чăваш халăхĕн нушине, хуйхи-суйхине тарăн уçса кăтартать.

Н.В.Шупуççынни поэзи хайлавĕсенче тĕрлĕ тема хускатать. Вĕсенчен пĕри – сывлăхшăн чи сиенлĕ хăнăху-йăла – чĕлĕм (пирус) туртни. Çав усал йăлана питлес, çынсене чĕлĕм туртма пăрахтарас шухăш çыравçа тахçанах кăсăклантарнă ĕнтĕ. Çавăнпа вăл хăйĕн сăввисене 1911 çулта Хусанта «Эрех ĕçме пăрахăр...» ятпа уйрăм кĕнекен пичетлет. Унта сăвăçăн «Пĕтелмей» поэми тата «Чĕлĕм» сăвви те кĕнĕ. Автор кĕнекере ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхнине тата чĕлĕм тĕтĕмĕпе пуçа минретнине сивлет. «Эрех ĕçме пăрахăр. Эрех этеме пĕтерет. Чĕлĕм туртма пăрахăр. Чĕлĕм туртни мĕн усси пур?» – тет Шупуççынни.

Çак кĕнекере «Чĕлĕм» ятлă сăвă пирки Шупуççынни хăй каланине шута илсен ăна Шупашкар çывăхĕнче пулса иртнĕ вăйлă пушар хыççăн 1910 çулта çырнă пек пулса тухать. Автор сăвва çапла пуçласа ярать:

Тĕтĕм ашшĕ,
Ырă чĕлĕм,
Мухтав сана,
Кукăр пуç.
Тутан ашшĕ,
Çăвар тути,
Чĕрен çăвĕ,
Тавтапуç!

Çак йĕркесемпе паллашсанах лирика геройĕ чĕлĕме мухтанă пек туйăнать, ăна вăл «тĕтĕм ашшĕ» тесе тÿрех сăнарлă сăмахсемпе, танлаштарусемпе тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ ытарлăн шахвăртса калать. Поэт чĕлĕме тутлă апат çинĕ хыççăн епле хатĕрленине, ырă табак (махорка) тултарнине, чунтан, пур кăмăлтан савса чĕртнине, тута тăсса пылаккăн ĕмнине сăнарлăн ÿкерсе кăтартать. Унсăрăн пурăнма та çук иккен:

Тĕнче сана
Туман пулсан
Эпир хальччен
Пĕтетпĕр:
Шухăшлă çын
Çăварĕнче,
Ăсĕнче те
Пахарах,
Хуйхăллисен
Тутисенче
Хуйхинчен те
Маларах.

Чĕлĕме мухтанă май вăл инкек çинчен те систерет:

Хăш чух санран
Вут-хĕм тухса
Ялĕпеле
Çунаççĕ.

Хайхи малтан мухтани çаврăнса хирĕçле пĕлтерĕш туянать. Чĕлĕм нушапа тата инкекпе юнашарах çÿрет иккен.

Хуйхă тесе
Çынсем вара
Каллех сана
Тытаççĕ:
Чĕлĕм лайăх,
Табак хаяр –
Туртас тесе
Пуплеççĕ.

Çапла вара, чĕлĕм нуша пекех, пĕр иленсен этем çумĕнчен хăпасшăн мар. Пĕр хăнăхсан туртма пăрахма йывăр иккен.

Н.В.Шупуççынни сăвва «Эй, чĕлĕм, ĕмĕр сыв пул, сана пурте мухтаççĕ» сăмахсемпе вĕçлет. Çак йĕркесемпе автор сывă пурнăç йĕркине нимĕн те çитменнине палăртать.

Чĕлĕм (пирус) туртасси хальхи вăхăтра та çивĕч ыйтусенчен пĕри шутланать. «Пуçа чиксех тутисемпе пăккин-пăккин ĕмеççĕ», – тет автор. Чăнах та, халĕ çамрăкки те, ватти те, арçынпа танах хĕрарăмĕ те çăвара пирус хыпать. Аслисене кура ачисем те, хĕрсем те «чĕлĕм чури» пулса тăчĕç.

Паян Раççей правительстви чĕлĕм туртнипе кĕрешме ятарлă хушу кăларнă. Халăх йышлă вырăнсенче, вокзалсемпе аэропортсенче, поездсенче, шкулсен çывăхĕсенче тата ытти çĕрте пирус туртма чарнă. Табак туртакансемпе кĕрешни питĕ пĕлтерĕшлĕ. 2010 çулта, халăхран ыйтса пĕлнĕ тăрăх, çĕршывра аслисенчен 40 процент туртакансем пулнă иккен. Табак туртассипе тивĕçлĕ йышăнусем тунă хыççăн чĕлĕмпе туслисен йышĕ юлашки çулсенче чакни паллă.

Пирĕн республикăра «Раççей – спорт çĕршывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ иртĕ. Раççей Президенчĕ Владимир Владимирович Путин тата ыттисем те Чăваш Республики спорта аталантарас тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртрĕç. Сывлăха упрас тата ăна сыхлас ĕçре спорт пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каламасăрах паллă. Спортпа мĕн чухлĕ çын ытларах туслашать, çавăн чухлĕ туртакансен йышĕ те сахалланать. Ку тĕлĕшпе республика Пуçлăхĕ М.В.Игнатьев та пысăк форум хыççăн иртнĕ пресс-конференцире палăртса хăварчĕ.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.***

## Хĕл Мучие пирĕнтен – парне



Ачасем кăна парнешĕн савăнаççĕ тетĕр-и? Çук! Аслисем те кĕçĕннисенчен парне илсен тем пекех хĕпĕртеççĕ. Çĕнĕ çул умĕн вара пушшех те. Уйрăмах пирĕнтен кашни чăтăмсăр кĕтекен Хĕл Мучи парнешĕн хавас.

Çакна шкулта тăрăшса вĕренекен тата пур çĕрте те ÿсĕмпе, пултарулăхпа палăракан аван ăнланать. Пирĕн шкул ачисен пушă вăхăт çук та тейĕн. Вĕсем яланах тĕрлĕ мероприятие хутшăнаççĕ, конкурссемпе ăмăртусенче палăраççĕ, тĕлпулусемпе куравсем ирттереççĕ...

Анчахрах хулари ача-пăча библиотекинче Чăваш патшалăх университечĕн пиллĕкмĕш курс студенткипе Олеся Игнатьевăпа тĕлпулчĕç. Пиллĕкмĕш «а» тата «б» класс вĕренекенĕсем алă вăйне виçессипе Европа чемпионки ята çĕнсе илнĕ спортсменкăпа нумайччен калаçрĕç. Ачасем Олесьăн нумай медальне курса тĕлĕнчĕç, чемпионкăпа хире-хирĕç ларса вăй та виçрĕç. Пиллĕкмĕш «а» класри Ангелина Васильевăпа Павел Иванов пултарулăхах пулни курăнчĕ. Ачасем чемпионкăна хăйсем патне шкула зарядкăна чĕнчĕç. Хăйсем те сывлăха кашни кун пиçĕхтерме, шкулта лайăх вĕренме сăмах пачĕç. Çĕнĕ çула лайăх паллăсемпе кăна кĕтсе илме, Хĕл Мучине парне пама калаçса татăлчĕç.

Культура çулталăкĕ вĕçленсе пырать. Ăна халалласа мĕн тĕрлĕ мероприяти кăна иртмерĕ пуль шкулта! Тăваттăмĕш ÿнер шкулĕнче «Шупашкар хули – ачасен куçĕпе» пултарулăх форумĕ пулчĕ. Пĕр конкурсăн «Хула урамĕсен – вĕсен ячĕсемпе» номинацие улттăмĕш «а» класри Анна Федорова (2-мĕш вырăн), саккăрмĕш «а» класри Карина Ястребова (3-мĕш вырăн) çĕнтерни питех те савăнтарчĕ.

Тĕрлĕ ÿкерчĕксем тăвакансен, алĕç ăстисен конкурсĕсенче те Станислав Булаткин, Регина Ефимова, Алексей Степанов çĕнтерчĕç. Ытти нумай конкурсра, ăмăртура Мария Кириллова, Мария Паскина, Наташа Алякина палăрнине епле савăнса пĕлтермĕн-ха! Вĕсем хăйсене çеç мар, юлташĕсене те хавхалантараççĕ.

***Альбина ТИМОФЕЕВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
28-мĕш шкул.

**Сăнÿкерчĕкре:** Анна Федоровăпа Карина Ястребова.

## Пултаруллă Настя



– Чăваш поэчĕсен сăввисене вулама ачаранах юрататăп. Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлейĕ, Ухсай Яккăвĕ, Раиса Сарпи çырнисем уйрăмах кăмăла çěклеççĕ, – тет шкулта «4» тата «5» паллăсемпе çеç вĕренекен Анастасия Семенова. Вăл класра чи маттуррисенчен пĕри. Настя спортпа та туслă. Сцена çинче ăсталăхĕпе те пĕрре çеç мар палăрнă. Юрлас, ташлас енĕпе те пултаруллă. Спектакльсенче выляма та хаваспах хутшăнать. Иртнĕ çул шкулти драма кружокĕ лартнă «Кай, кай Ивана» спектакльте Кĕтерук рольне чăн-чăн артист пекех вылярĕ. Олимпиадăсемпе тĕрлĕ конкурсра та хастар. Кăçал районта иртнĕ «Çеçпĕл çеçкисем» литература фестивальне хăй çырнă сăвăпа мала тухрĕ. Аннесене халалланă çав сăвва. Акă вăл.

### Аннене

Анне... Ун пек хисеплĕ ят
Пулман та, пулмĕ тĕнчере.
Нихçан та эп ямастăп ят,
Анне – вăл манăн чĕрере.

Аннеçĕм юнашар пулсан
Сип-сивĕ кун та ăшăрах.
Аннеçĕмпе пĕрле пулсан
Йывăр чухне те çăмăлрах.

Анне юрри чуна уçать.
Анне кулли хĕлхем сапать.
Анне алли çунат хушать.
Анне пурри хăват парать.

Чĕкеç чĕлхиллĕ эс, анне.
Шăпчăк юрриллĕ эс, анне.
Хĕвел ăшшиллĕ эс, анне.
Çăлтăр çутиллĕ эс, анне.

Аннеçĕме эп ыталатăп,
Тав сăмахне чунтан калатăп.
Аннеçĕмпе эп мухтанатăп,
Çĕре çити пуçа таятăп.

Настьăна малашне те çавăн пек маттур, пултаруллă пулма ырă çеç сунас килет.

***Петр НИКИФОРОВ,***
***вĕрентекен.***

Тăвай районĕ,
Элпуç шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1471 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4766
Пичете декабрь уйăхĕн 10-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# «Медальсем кăмăла çĕклеççĕ»



**Çĕр çинче кашни çыннăн ĕмĕт пур. Костьăн та ĕмĕчĕ пысăк – спорт мастерĕ тата паралимпиадăна хутшăнса çĕршыв чемпионĕ пуласшăн вăл...**

Костя 1997 çулта çуралнă. Шкул çулне çитсен Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан ятарлă коррекци интернат шкулта вĕреннĕ. Вăл çапах хуçăлман, аталанма тытăннă. Маттур та çирĕп кăмăллă ача спорт çынна сывлăх парнелессе шаннă, ĕненнĕ.

Кăçал çуркунне яш патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене тытса тăван Ухман ялне таврăнчĕ. Вĕренÿре аван ĕлкĕрсе пынă Костя. Вăл юлашки икĕ çулта 44 медальпе 49 диплом, тав хучĕ илме тивĕç пулнă.

Мĕн пĕчĕкрен спортпа туслашни тĕрлĕ йывăрлăха парăнтарма пулăшнă ăна. Арçын ача ăсталăхне кунсерен аталантарнă, тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнса çитĕнÿ картлашки çине хăпарнă. Шашка, шахматла вылясси те уншăн чун иленĕçĕ пулнă. Республикăра иртекен ăмăртусенче шахматла выляса 6 хутчен, шашкăлла 5 хутчен çĕнтернĕ...

Маттур яш вăл – Константин Альфредович Андреев. Вăл çăмăл атлетикăна юратать. Унăн пултарулăхне 2 çул каялла ĕçлеме пуçланă Алексей Мефодьевич Александров тÿрех асăрханă, спортсменăн вăйне шаннă. Ăна пула Костя çăмăл атлетика енне пушшех туртăннă.

Тÿсĕмлĕ, çирĕп кăмăллă çамрăк чылай хутчен çĕнтерÿ картлашки çине хăпарнă. Вăл Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Пушкăрт Республикинчи Салават хулинче irттернĕ Пĕтĕм Раççейри ăмăртусенче те малти вырăнсене тухнă, хаклă парнесене тивĕçнĕ. Салаватра 5 хутчен çĕнтернĕ.

Унăн çитĕнĕвĕсемшĕн педагогсемпе вĕренекенсем çеç мар, амăшĕпе, Надежда Николаевна Андреевăпа, ашшĕ, Александр Семенович Дурбанов та савăнаççĕ. Денис пиччĕшĕпе Софья йăмăкĕ те унпа мăнаçланаççĕ.

Пÿртре медальсем çакăнса тăни кăмăла çĕклет паллах. Дипломсемпе тав хучĕсем чуна хăпартлантараççĕ.

Костя чăннипех те маттур ача. 2013 çулта çамрăк спортсмен ахальтен мар Шупашкар хулин пуçлăхĕн Л. И. Черкесовăн ятарлă стипендине илме тивĕçнĕ.

Костя халĕ техникумра ăс пухать. Куллен тренировкăна çÿрет. Пуласлăхĕ ăнăçса кăна пытăрччĕ унăн. Çитес ăмăртусенче ăнăçу сунатпăр.

***Маргарита БОРИСОВА,***
***халăха вĕрентес ĕçĕн отличникĕ.***

Канаш районĕ,
Ухман.

# Виктория – çĕнтерÿ!

«Çутçанталăкăн начар çанталăкĕ çук», – теççĕ-ха халăхра. Çак каларăшпа пурте килĕшмеççĕ ахăртнех. Ара, час-часах: «Эпĕ ăшă та хĕвеллĕ çу кунĕсене ытларах кăмăллатăп!» – тенине илтме пулать. Теприсем вара: «Пĕтĕм тĕнче шурă юрпа витĕннĕ вăхăта юрататпăр...» – теççĕ хаваслăн.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш шкулĕнче вĕренекен Вика Ефремова та çуллахи вăхăта ытларах килĕштерет. Ара, вăл çулла çуралнă-çке.

Ун чухне утă вăхăчĕ пулнă. Амăшĕпе ашшĕ çемьери пĕрремĕш пепкене мĕнле ят парассине шухăшланă. Амăшĕ ун чухне ачипе больницăра пулнă-ха, ашшĕ ялта. Утă хатĕрленĕ. Пĕр хĕвеллĕ кун çапла ашшĕ килне таврăнса сĕтел хушшине апат çиме ларать. Викăн кукамăшĕ тĕпелте кăштăртатнă. Иккĕшĕ тин çуралнă хĕрачана мĕнле ят парассине шухăшлаççĕ. Ара, тепĕр кунне вĕсене илме каймалла-çке.

– Атьăр, Виктория тесе чĕнетпĕр, – сăмах хушать кукамăшĕ. Вара сĕтел çинчи пĕр тирĕк туп-тулли виктори çырли енне пуçĕпе сĕлтсе кăтартать. Хĕп-хĕрлĕ те сĕтеклĕскер куç тулли ларать. Чăнах та, Виктория хитре ят. Ашшĕн кăмăлне те кайнă ку. Çитменнине вăл «çĕнтерÿ» тенине те пĕлтерет. Амăшĕ те ашшĕн шухăшĕпе килĕшнĕ. Вара тинех хĕрача Виктория ятлă пулса тăнă.

Çавраăнăçуллăскер ачаранах хăйне хастаррăн кăтартнă. Садика çÿренĕ чухнех спортпа туслашнă. Хăйĕн пĕрремĕш ăмăртуне те хальхи пекех астăвать Вика. Инçĕшне сикессипе чи маттурри пулнă вăл ун чухне, пуринчен инçе сиксе мала тухнă. Çак çĕнтерÿ питех те хавхалантарнă пĕчĕкскере. Çавăнпа вăл малашне те спортпа туслă пулма шут тытнă.

Вăтам классенче вĕренме пуçласан кашни ăмăртăва тенĕ пекех хутшăнма пуçланă Вика. Эстафетăсенче те чылай палăрать. Ку таранччен миçе медаль, грамота çĕнсе илмен-ши? Шутласа та пĕтереймĕн. Шкул чысне ăмăртусенче хÿтĕлеме яланах хавас вăл. Çăмăл атлетикăпа кăсăкланаканскер футбол уйĕнче мечĕк хăвалама, хĕл кунĕсенче йĕлтĕрпе чупма кăмăллать. Çак спорт тĕсĕпе Викăн йăмăкĕ Вероника та туслă. Вăл та аппăшĕпе пĕрле тăтăшах ăмăртусене хутшăнать. Хĕрачасем çапла спорта кăмăлланăран тĕлĕнмелли çук. Ара, вĕсен амăшĕпе ашшĕ те мĕн пĕчĕкренех спортри çитĕнĕвĕсемпе палăрнă. Ашшĕ вара районта ирĕклĕ кĕрешÿпе чемпион ята та тивĕçнĕ.

Саккăрмĕш класра вĕренекен Вика малашне те спортпа туслă пуласшăн. Йăмăкĕ те унпа пĕр шухăшлă. Ун чухне вара сывлăх та çирĕпрех пулĕ. Ăна çамрăклах упрамалла-çке. Кайран кая юлма пултарать. Вика та çакна лайăх ăнланать, Çавăнпа çитĕнсен тухтăр професийĕнче вăй хурассишĕн ĕмĕтленет. Чирлисене епле пулсан та сыватма тăрăшĕ вăл. «Сывлăхран хакли нимĕн те çук», – тет Вика çирĕппĕн.

Тăрăшуллăскер пушă вăхăта та ахаль irттермест. Юратнă кукамăшĕ патне килсе тĕрлĕ ĕçе пурнăçлама пулăшать. Çуллахи вăхăтра ун патĕнчех пурăнать вăл. Ун чухне ĕçĕ те нумайрах-çке ялта. Пахчара тăрмашнисĕр пуçне хур, кăвакал чĕпписене пăхмалла, курак йăтса каясран сыхламалла. Вика кукамăшĕ мĕн калани-не йăлтах итлет.

– Ĕçрен хăрамалла мар, – вĕрентет мăнукне ватă пĕр-пĕр ĕçе тума пуçăниччен. – Куç хăрать те алă тăвать.

Паха та кирлĕ сĕнÿ-канашпа тăтăшах пулăшать кукамăшĕ Викăна. Пурнăçра тем те куратăн, такама та тĕл пулатăн-çке.



Кукамăшĕ вĕрентнипех халĕ Вика çыхма, тĕрлеме пĕлет. Акă кĕрхи каникул вăхăтĕнче вăл алсиш-нуски тавраш çыхма вĕренесшĕн-ха. Сивĕ хĕл кунĕсем çывхарса пыраççĕ-çке. Ун чух вара ăшă ăпаласене тăхăнсан пачах та шăнмăн, хăв çыхнисемпе пушшех те.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

# Тусу хăвăнтан лайăхрах пултăр



**Кирек хăш шкул та хăйĕн вĕренекенĕсемпе мухтанма пултарать, ку педагогсен ĕçĕ харама кайманнине пĕлтерет-çке. Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре те шкул чысне çĕклекенсем сахал мар. Тăххăрмĕш класра вĕренекен Анюта Обручковăпа Татьяна Чернова тата саккăрмĕшĕнчи Людмила Амасева çав маттурсен йышĕнче.**

Районти предмет олимпиадисене хутшăнма тивĕçлисене суйланă чухне вĕрентекенсем кашнинчех Таньăна сĕнеççĕ. Йывăрлăха парăнма хăнăхман хĕрача яланах тĕплĕн хатĕрленет, пысăк кăтартусемпе савăнтарать. Историпе те, общество пĕлĕвĕпе те, вырăс чĕлхипе тата литературипе те, акăлчан чĕлхипе те районта малти вырăнсене тухнă вăл. Пĕлÿ тĕнчине çул такăрлатма тытăннăранпах алăран кĕнеке ямасть-çке, тавракурăмне анлăлатма тата нумай çĕннине пĕлме ăнтăлать.

Анюта вара спорта чунĕпе парăннă. Йĕлтĕрпе чупма питĕ юратать. Лаш Таяпара иртнĕ район ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă. Раççей йĕлтĕр йĕрне те хутшăннă. Биатлонпа туслăскер сывă пурнăç йĕркине тытса пырать. Камран вĕренмелли те пур çав. Ырă тĕслĕх кăтартаканĕ – амăшĕн йăмăкĕ, çăмăл атлетикăпа спорт мастăрĕ ята тивĕçнĕ, Раççей чемпионки, çурма марафонра тĕнче чемпионĕ, Европа чемпионĕсен кубокĕн çĕнтерÿçи Лидия Григорьева.

– Аннен тепĕр йăмăкĕ Ирина Тимофеева та спортсменка. Халĕ иккĕшĕ те тренер пулса ĕçлеççĕ, – ăнлантарчĕ Анюта.

Вăл спортпа туслашакансен сывлăхĕ çирĕп пуласса ĕненет. Чупнă хыççăн хăйне савăнăçлăрах тата чылай хавхаланулăрах туять.

Люда вара кĕнекепе туслă. Акăлчанла тăрăшса вĕренекенскер çак чĕлхепе çырнă кĕнекесене алăран вĕçертмест. Ют çĕршыв литературине питĕ килĕштерет. Пулас профессине чикĕ леш енчи ĕçсемпе çыхăнтарасшăн. Хăçан та пулин, тен, урăх çĕршывра пурăнма тÿр килĕ ăна? Уйрăмах Вашингтон штатĕнчи Форкс хулине кайса курма ĕмĕтленет.

– Пĕчĕк хула çеç вăл. Унта ялан çумăр çăвать. Çапах питĕ илĕртÿллĕ пек туйăнать. Манăн шухăшпа, Форксра лăпкăн пурăнма пулать, – мĕн пĕлнине каласа пачĕ Люда.

Унăн аппăшĕ Аня акăлчанла питĕ лайăх вĕреннĕ. Хăш чухне хĕрачасем пĕр-пĕринпе çак чĕлхепе пуплеççĕ, килтисем вара вĕсем мĕн çинчен калаçнине ăнланмаççĕ те.

«Тусу хăвăнтан лайăхрах пултăр», – теççĕ халăхра. Юлташран ыррине вĕренмеллине пĕлтермеççĕ-и çак сăмахсем? Çапла пулинех. Çак уйрăлми туссем те пĕр-пĕрне ялан хавхалантараççĕ, телее пĕрле пайлаççĕ, пĕри те пулин йывăрлăха кĕрсе ÿксен ăна алă параççĕ. Эсир те, ачасем, туслăха хаклама пĕлĕр, кашни çынра ыррине курма вĕренĕр.

***Лариса ПЕТРОВА.***

# Пĕтĕм тĕнчери футбол кунĕ



Икĕ пин те пилĕкçĕре яхăн çул каяллах Авалхи Грецире тата Римра футболла выляни паллă. Çулсеренех декабрĕн 10-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери футбол кунне уявласси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Пин-пин çыншăн вăл вăйă çеç мар, хăйне евĕр пурнăç та. «Мечĕк тапасси» çинчен пĕрремĕш хут асăннине Китай çырăвĕсенче тупнă, вăл пирĕн эрăчченхи иккĕмĕш пинçуллăха лекет. Çак вăййа ун чухне Цу Чю тенĕ, ку «урапа тĕкесси» тенине пĕлтерет. Футболла выляни Китай салтакĕсене кĕлеткене çирĕплетме пулăшнă имĕш.

Хăшĕ-пĕри футбол Англире саккăрмĕш ĕмĕрте пурăннă саксонецсен тискер вăййи пулнă тесе ĕнентерет. Анчах вăл хăçан пуçланса кайнине никам та тĕплĕн çирĕплетсе калаймасть. Ку вăйăра хапха тата хапхаçă пулнине, вăл çар хатĕрленĕвĕн пайĕ шутланнине тата виçĕ пин çул каяллах анлă сарăлнине çеç пĕлетпĕр паян. 1891 çулхи март уйăхĕнче хапхана пуçласа сетка çакнă, ун чухне Çурçĕр тата Кăнтăр Англи командисем тупăшнă.

Грецире çак вăййа «мечĕкшĕн çапăçни» тенĕ. Çавăнпа выляннă чухне, ахăртнех, çар искусствин ăслайĕсемпе те усă курнă.

1897 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕнче Раççейре пĕрремĕш официаллă футбол матчĕ иртнĕ.

1930 çулхи июлĕн 13-мĕшĕнче Уругвайра футбол енĕпе историре пĕрремĕш хут Тĕнче чемпионачĕ йĕркеленĕ.

1942 çулхи майăн 31-мĕшĕнче тăшман хупăрланă Ленинградри «Динамо» стадионĕнче те футбол матчĕ иртнĕ.

## Чăвашра

Чăваш футболĕ вара Улатăрта çуралнă. Пĕртăван Василий тата Александр Мухинсем Мускав шкулĕ хыççăн Сăр çинчи хулана ĕçлеме килнĕ. Çапла 1912 çулта «Вега» ятлă пĕрремĕш команда йĕркеленнĕ, ун хыççăн «Спорт» та, ыттисем те пуçланса кайнă. Малтанхи турнирта «Вега» çĕнтернĕ. Пиччĕшĕпе шăллĕне Питĕрти коммерци училищинче вĕренекен, çуллахи каникула тăван хулана килсе çитнĕ Н.Сазыкин пулăшма тытăннă. Хăй те футболла выляннă вăл, «Спорт» капитанĕ пулнă. 1913 çулта Улатăрта иккĕмĕш турнир иртнĕ, унта вунă команда хутшăннă. Икĕ çултан Улатăр командисем Мордовири Ардатов футболисчĕсемпе пуçласа тупăшнă.



1915 çулта Етĕрнере, кăшт каярах Шупашкарта тата Çĕрпÿре те футбол командисем йĕркеленнĕ. Çапла вара Чăваш Енри олимпиадăна (1922 çулта) футбол вăййине те кĕртнĕ. Çав çулах Шупашкар команди Самарăра Атăлçи кубокĕшĕн тупăшнă.

1931 çулта Шупашкар команди Норвеги футболисчĕсемпе юлташла матч ирттерни республикăмăршăн пысăк пулăм шутланнă. Ун хыççăн Шупашкарта Франци, Венгри тата Китай командисемпе те тĕлпулу иртнĕ. 1934 çултанпа Чăваш Ен чемпионатне ирттерме тытăннă. «Волга», «Энергия», «Сталь», «Динамо», çавăн пекех Çĕмĕрле, Улатăр, Канаш, Çĕнĕ Шупашкар тата Вăрнар командисем тĕрлĕ çулсенче çĕнтерÿçĕсен йышне кĕнĕ. Пирĕн чи лайăх футболистсем – С.Башкиров, Е.Коньякова, Е.Лихачева – спорт мастăрĕ пулса тăнă.

Футбол мĕнле аталанасси тренертан та чылай килет. Çавăнпа çак вăйă республикăра анлă сарăлнăшăн Улатăр хастарĕсене – пĕртăван Мухинсене, М.Зефирова, К.Никишева, М.Кренделева, В.Соломахăна, А.Финогенова, А.Некрасова – тав тумалла. Республика (Раççей) категорийĕнчи судьясем пирĕн 40-50-мĕш çулсенчех палăрма тытăнчĕç. Вĕсем – В.Станюков, Н.Хорьков, В.Грешнячий.

Эпир чăваш футболĕн пуласлăхне ĕненетпĕр. «Тантăш» вулаканĕсем те çак вăйăра палăрса ăсталăхне ÿстерессе, тăван ен ятне çĕклессе шанатпăр. Футбол кунĕ ячĕпе сире, туссем!

## Тăрăшуллисене ăнăçу нумай кĕттермест

Эпĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этмен вăтам шкулĕнче вĕренетĕп. Класра вунтăххăрăн. Пирĕн йыш питĕ туслă, çавăнпах пулĕ тĕрлĕрен конкурссенче те тăтăшах мала тухатпăр. Шкулта час-часах спорт ăмăртăвĕсем иртеççĕ. Уйрăмах футболла выляма юрататпăр. Çавна май «Акула» ятлă команда йĕркелерĕмĕр. Капитанĕ – Рома Романов. Тапăнаканнисем эпир Ромăпа иккĕн, варринче пире яланах Дима Яхатин пулăшать. Сыхлаканнисем вара – Даниил Чернов, Вова Михеев тата Вася Рыжов. Денис Илюшкин – питĕ лайăх хапхаçă, çавăнпа та пирĕн хапхана никам та мечĕк тапса кĕртеймест. Питĕ тăрăшса вылятпăр. Тăрăшуллисене вара, хăвăрах пĕлетĕр, ăнăçу нумай кĕттермест. Кĕркуннехи каникул вăхăтĕнче район шайĕнче иртнĕ футбол турнирĕнче виççĕмĕш вырăна тухрăмăр. Паллах, пире физкультура вĕрентекенĕ Николай Федорович Михеев тĕрлĕрен сĕнÿпе пулăшать. Халĕ вара тăрăшса çуркуннехи турнира хатĕрленетпĕр, унта та çĕнтересчĕ.

*Кирилл АРТЮШКИН, 5 класс.*

## Паллă футболист пуласчĕ

«Спорт вăл – туслăх тата сывлăх», – тесе калас килет манăн, мĕншĕн тесен эпĕ спорт вăййисене юрататăп, ăмăртусене те хаваспах хутшăнатăп. Пирĕн шкулта теннисла вылясси анлă сарăлнă. Арçын ачасем çеç мар, хĕрачасем те килĕштереççĕ çак вăййа. Хĕлле юр çуса лартсан вара Никита шăллămпа йĕлтĕр сырса Хăнатар çырмине ярăнма çÿретпĕр. Мĕн тери аван унта! Çуркуннепе çулла вара чупма юрататăп. Çул çинче велосипедпа пыракан Никитăна хăвалатăп, унран юлмастăп. Тепĕр чухне шăллăм манăн тренер пекех туйăнать. Пĕр-пĕр ăмăртăва хатĕрленме вăл самаях пулăшать. Тăрăшни сая каймарĕ. Районта вăтам класс ачисем хушшинче çĕнтерÿçĕ пулса тăтăм.

Манăн чи юратнă вăйă – футбол. Ăна пирĕн аттесемпе асаттесем те килĕштернĕ-çке. Çуллахи вăхăтра куça уçнă-уçман шкул стадионне тухса чупатпăр, мечĕк хăвалатпăр. Пирĕн Сергей Игнашевич футболист пек паллă пулас килет вĕт! Унăн амăшĕ Хĕрлĕ Чутайран пулнине пĕлетпĕр. Тепĕр чухне юлхавлансан анне пире ятлакалать те. Эпир ăмăртăвва хутшăнса çĕнтерсен вара: «Эсир питĕ маттур-çке манăн», – тесе ырлать. Çакă вара савăнăç мар-и?

*Рома РОМАНОВ, 5 класс.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

ЧУНТАН

# Ахах-мерчен пек юр пĕрчи



Хура кĕркунне хыççăн хĕл çитет. Хĕллехи вăхăтăн хăйĕн илемĕ, çавăнпа та эпир юр çăвасса чăтăмсăр кĕтетпĕр. Хура çĕр çине шап-шурă юр пĕрчисем ÿксен тавралăх юмахри пек курăнма пуçлать. Хитре юр пĕрчисене ытараймасăр тытса чĕре çумне пăчăртас килет, анчах вĕсем тÿрех ирĕлсе каяççĕ. Мамăк евĕрлĕскерсене сăнама юрататăп: шурă, хитре, кăпăшка юр пĕрчисем ахах-мерчен пек курăнса каяççĕ. Çÿлелле кармашса пăхнипе вăхăт иртнине те сисейместĕн, унтан пăхатăн та: Хĕл Мучи шап-шурă кавир сарса та хунă. Эпĕ вара урасемпе нăтăрт! нăтăрт! тутарса çак киленÿпе хавхаланса килелле чупатăп. Ара, часах кĕтнĕ уяв Çĕнĕ çул çитет! Эх, пĕчĕк юр пĕрчишĕн мĕн тери пысăк савăнăç! Манăн вара ун çинчен юрă юрлас, сăвă шăрçалас килет!

*Вова МИХЕЕВ, 5 класс.*

© *Кристина ВАСИЛЬЕВА* (*Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа*) *ÿкерчĕкĕсем.*

# Нихăçан манăçми тусăм

Кашни ача кушака е йытта хăйĕн юлташĕ вырăнне хурать пулĕ. Маншăн вара чĕрчунсенчен чи çывăххи Мухтар йытăччĕ. Вăл хăмăр тĕслĕччĕ, ури лапписемпе хÿри вĕçĕ шап-шурăччĕ, çамки варринче те шурă çăлтăр пурччĕ. Мухтар мана яланах шкула ăсататчĕ, эпĕ таврăнасса кĕтсе илсен: «Дима, çитрĕн-и?» – тенĕ пекех малти урисене тăсса паратчĕ. Манпа пĕрле ĕне черетне те, шыв хĕрне пулă тытма та пыратчĕ. Çуллахи вăхăтра Мухтарпа иксĕмĕрех вăрмана каяттăмăр. Киле таврăннă чухне вăл малта çул кăтартса пыратчĕ. Эпĕ ăçта, вăл та çавăнтахчĕ.

Хăш чухне атте киле часах килеймесен эпир Мухтарпа ăна шырама каяттăмăр. Атте эрех ĕçкеленине сиссен манăн тус нăйкăшма пуçлатчĕ: «Урăх ан ĕç, Димăна йывăр килет», – тенĕ пекех туйăнатчĕ.

Эпĕ ăна яланах мĕн те пулин тутлине çитерме тăрăшаттăм. Вăл мана питрен çулласа тав тăватчĕ.

Анчах пĕррехинче пирĕн Мухтара темиçе йытă тапăннă, тулласа вĕлернĕ. Питĕ хурлантăм. Çывăх юлташăма вăрман хĕрринче пытартăм, вилтăприйĕ çине юратнă мечĕкне хурса хăвартăм. Эпĕ ăна нихăçан та манаймăп.

*Дима ЯХАТИН, 5 класс.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.



П.БЕРЕЗНЯК

# Минăсем сирпĕнеççĕ...



– Анне, уç-ха алăка. Эпĕ ку, – илтĕнчĕ ача сасси чÿрече айĕнчен.

Алăк чĕриклетрĕ те пысăках мар, имшеркке арçын ача пÿрте кĕрсе тăчĕ.

Сĕм çĕрле. Пăч тĕттĕм. Çапах та кил хуçисем çутă çутмарĕç. Арçын ача шăппăн сывлăх сунчĕ. Хăйне сыхă тытрĕ вăл, урисем ывăннă пулин те ларма хăяймарĕ. Темĕнле выртса канас килсен те хăйне лĕнчĕрленме памарĕ. Кĕске калаçу хыççăн пÿртрен тухрĕ.

– Ну, юрĕ, ан кулянăр...

Темиçе минутран вăл анкартинче пусма тупса аслăк çине хăпарса выртрĕ, хăйĕнпе юнашар гранатисемпе наганне хучĕ. Çав арçын ача – Алеша Антонюк.

## Аслисемпе пĕр тан

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан Алеша Антонюк Черни ялĕнчи шкултан 5-мĕш класран вĕренсе тухнăччĕ. Çав çулах вăл пионера та кĕнĕччĕ. Шкулта вунă çул вĕреннĕ хыççăн института кĕме ĕмĕтленетчĕ. Анчах вăрçă ĕмĕте пурнăçлама памарĕ. Тăван Черни ялне кĕтмен çичĕ ют вирхĕнсе кĕчĕ – фашистсем. Вĕсем выçă кашкăрсем пек кĕрсе пÿртсене çаратнине, айăпсăр çынсене нушалантарнине, вĕсене Германие вăйпа хăваланине асăрхарĕ Алеша.

Арçын ача чĕринче курайманлăх çуралчĕ. Çав туйăм кунсерен ÿссе, вĕресе тăчĕ. Фашиста хирĕç аслисемпе тан çапăçма тĕллев лартрĕ вăл, ирсĕрсене тăван çĕр çинчен хăвăртрах хăваласа ярасшăн пулчĕ, телейлĕ ачалăхне тавăрма ĕмĕтленчĕ.



Алеша партизансен Чернок ячĕллĕ отрядĕнче икĕ çула яхăн çыхăнуçă пулчĕ. Эмелсемпе хĕç-пăшал тупас тата нимĕçсемпе полицайсем ăçта вырнаçнине пĕлтерес ĕçе пурнăçларĕ вăл. Пур хыпара та хăйĕн партизанмучирен пĕлтерсе тăчĕ.

1943 çулхи çуркунне Алешăн ашшĕамăшĕпе тăван килне хăварса тухса кайма тиврĕ. Ку ĕç çапла пулчĕ. Пĕррехинче Антонюксен килне фашистсене пăхăнса пурăнакан Антон Карпук кĕчĕ, Алешăпа пиччĕшне Сергее Германие ĕçлеме кайма ÿкĕтлерĕ.



– Унта сире пурăнма аван пулĕ. Нумай укçа ĕçлесе илсен аçăр-аннĕре ярса парăр.

Антонюксен çемйи – ашшĕ Василий Григорьевич, амăшĕ Мария Калениковна тата тăватă ывăлĕ – шăпăртах. Сăн-пичĕсем тĕксĕм, çиллес.

«Хуть те мĕн кала, çапах пирĕнтен нихăшĕ те фашистшăн ĕçлес çук», – шухăшларĕ кашниех. Анчах çакна пĕри те сасăпа каламарĕ.

Сасартăк кĕтмен çĕртен Алешăн тарăхнă сасси янăрарĕ:

– Германири пурнăç çав тери аван пулсан унта хăвăн пĕртăванун ывăлĕсене ăсат. Эпир вара тарçă пулас çук!

«Агитатор» ним каламасăр тухса кайрĕ. Тепĕр кунне вара Алешăн сăмахĕсем çинчен полицайсем те пĕлчĕç. Вĕсем Антонюксен çуртне темиçе те пырса кĕчĕç, анчах тĕрĕс сăмахсене пĕр хăрамасăр калакана тĕл пулаймарĕç.

Пĕррехинче Алеша аслăк çинче çĕр каçма шут тытрĕ. Типĕтнĕ утă çине хăпарса выртрĕ кăна, сасартăк такам сассисем илтĕнчĕç. Электрохунарсен çутисем мĕлтлетрĕç. Кусем – полицайсем.

«Пусмапа хăпарсан, – шухăшларĕ Алеша, – вĕсене урапа хыттăн тапса антарăп, унтан пĕр-ик граната ывăтăп та уй-хире чупса тарăп».

Телее, нимĕн хăрушши те биксе тухмарĕ. Полицайсем унта-кунта çутаткаласа, пăхкаласа çÿрерĕç те ятлаçса тухса кайрĕç. Темиçе кунтан вара Алеша партизан отрядне лекрĕ.

## Тĕрĕслеве тÿссе ирттерчĕ

...1943 çулхи май уйăхĕнче нимĕçсем партизан отрячĕ ăçта вырнаçнине тупса палăртнă. Тан мар çапăçу кунĕпе те вĕçленмерĕ. Партизансене парăнтарма çăмăл пулмарĕ. Çак тамăкла çапăçăва отрядăн чи çамрăк партизанĕ Алĕша Антонюк та хутшăнчĕ. Унăн автомачĕ гитлеровецсене самаях тĕп турĕ.

Тăшман çичĕ хутчен атакăна тухрĕ. Тăватă хутчен каялла чакрĕ. Кивьял вăрманĕнчи çапăçу Алешăна çар ĕçне кĕртсе ячĕ. Арçын ача тăшмана хирĕç аслисем пекех кĕрешме пултарнине кăтартса пачĕ. Часах ăна диверси ушкăнне кĕртрĕç.

## Сĕм çĕрле

Инçе çÿресси, засадăсем, «рельс вăрçи», нимĕçсем йышăннă вырăнсене тата полицайсене кĕтмен çĕртен тапăнни, тăшман тылĕнчи разведка – çакна йăлтах имшеркке курăнакан пĕчĕк Алеша пурнăçлама вăй çитерчĕ.

Пĕррехинче унăн диверси ушкăнĕ фашист офицерне тыткăна илме палăртрĕ. Брестпа Жлобинка хушшинчи Косичи ялĕнче нимĕç гарнизонĕ вырнаçнă. Вăл кунĕн-çĕрĕн чугун çула сыхлать. Çыхăнуçăсем партизансене гарнизон пуçлăхĕ хресчен патĕнче пурăннине, унăн çурчĕ гарнизонтан вăтăр утăмра пулнине пĕлтерчĕç. Вĕсемпе пĕрле куçаруçă та пур.

Ку, паллах, çăмăл ĕç мар. Ăна питĕ пĕлсе, асăрханса тата ытлашши сасă кăлармасăр пурнăçламалла. Кăшт йăнăшсанах пĕтĕм гарнизон çĕкленĕ.

Çак йывăр ĕçшĕн тăватă харсăр партизан яваплăх илчĕç: Александр Беляев, Николай Смаль, Алешăпа пиччĕшĕ Сергей. Палăртнă тăрăх, ял старостине те пĕрле чĕнмелле. Унăн вара хуçана сас памалла. Хуçа алăк уçĕ те партизансем пÿрте вирхĕнсе кĕрĕç, ыйхăллă офицерпа куçаруçине тыткăна илĕç.

Анчах шухăшланă пек пулмарĕ. Ял старости партизансемпе пыма килĕшмерĕ. Ăна пусахласа илсе кайма тиврĕ. Çурт патне пырсан виçĕ партизан ăна хупăрласа илчĕ. Алеша старостăпа пĕрле пÿрте кĕме хатĕрленчĕ. Анчах шăп алăк патне çитсен лешĕ хуçана хирĕç чĕнмессе пĕлтерчĕ. Алеша старостăна пуçĕнчен пистолетпа тĕллерĕ, тепĕр аллипе вара алăкран шаккарĕ. Кăшт вăхăт иртсен çенĕкре хуçа сасси илтĕнчĕ.

– Кам унта?

Староста шăпăртах. Алеша çухалса каймарĕ, староста сассине евĕрлерĕ:

– Хамăрăннисем, староста, уç...

Каçĕ тĕттĕм-тĕттĕм, йĕппе чиксен те куç курмасть. Хуçа чÿречерен пăхрĕ, анчах нимĕн те кураймарĕ, вара çенĕке утрĕ. Алăк сасси пулчĕ. Алеша старостăна пистолечĕпе малалла тĕртрĕ те хăй ун хыççăн утрĕ. Вĕсем кухньăна кĕчĕç. Староста шăпăртах.

Çак самантра хăйĕн пÿртне партизан ури ярса пуснине хуçа тĕшмĕртме те пултараймарĕ. Юнашарах – нимĕç гарнизонĕ, пÿртри чи лайăх кравать çинче фашист офицерĕ çывăрать. Хуçа шăрпăк чĕртрĕ те çак кĕске çутăпа усă курса Алеша офицер ăçта çывăрнине асăрхаса юлчĕ. Автомачĕпе пистолетне çывăхах хунă. Сасартăк фашист вăранчĕ те ыйхă витĕр хуçапа старостăна ятлама тытăнчĕ, çывăрма чăрмантараççĕ имĕш. Кĕтмен çĕртен электрохунар çути ялкăшса илчĕ. Алеша самантрах офицер кравачĕ çине ыткăнчĕ:

– Хендэ хох! – терĕ хуплам сасăпа.

Нимĕç аллине хĕç-пăшал енне тăсрĕ, анчах кая юлчĕ. Икĕ партизан чупса кĕчĕ. Тыткăна лекнисене картише илсе тухрĕç. Старостăпа хуçана пÿртре питĕрчĕç те ниçта та тухма хушмарĕç. Мĕскĕнсем çапла чĕтречĕтре тул çутăличченех ларчĕç вара.

Тыткăна лекнисене çав каçхинех партизан штабне çитерчĕç.

**(Вĕçĕ çитес номерте.)**

***Вырăсларан Лариса ПЕТРОВА куçарнă.***

"Атăлпа Урал хушшинче" проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать

# Тăванран та хаклăрах

– Ну, мăнукăмсем, питех те вăрăм çул сире ывăнтармаллипех ывăнтарчĕ пуль? – шеллесе те пуçĕсенчен ачашласа илчĕ Шурсухал лара-тăра пĕлмен Темтепĕлейкинпа Тăрăшара.

– Çук, асатте, çук... Пĕрре те ывăнман. Çак çулçÿрев чăннипех те асра юлĕ. – хуравларĕç пĕр харăсах икĕ шăпăрлан. – Ак, куратăн-и, асатте, пирĕн çул дневникĕ кăна мар, сăнÿкерчĕксен альбомĕ те самаях хулăнланчĕ...

– Ак, тĕлĕнтермĕш! Эсир мана чăннипех те савăнтартăр, – йăл кулчĕ Шурсухал. Кĕçĕннисем хăш самантра-тăр йĕркелеме ĕлкĕрнĕ альбома алла илчĕ те ун-кун çавăркаларĕ. – Кунашкал пысăк ĕç тăвасса эпĕ кĕтменччĕ сирĕнтен. Унтан кăшт шухăша путса тăчĕ те савăнăç куççульне шурă татăкпа шăлса илсе: «Маттурсем, чăннипех те маттурсем. Иртнĕ кун-çула ыранхи ăру валли хăварма пултаракансем пекех туйăнтăр мана...»

– Ку çеç мар, асатте, эпĕ шкулта пĕрле вĕренекенсене хамăн ĕçсенчен хатĕрленĕ презентаципе те паллаштарас ĕмĕтлĕ-ха. Ку тĕлĕшпе мана истори вĕрентекен пулăшасса, ырă сĕнÿсем парасса питех шанатăп. Ыттисем те курса савăнччăр манăн çулçÿрев епле пуян та интереслĕ пулнине, – хăйĕн вăрттăн шухăшне пĕлтермесĕр чăтаймарĕ Темтепĕлейкин.

– Эпĕ те пиччене çак ĕçре пулăшма шантаратăп. Сăнÿкерчĕксене йĕркелесе вырнаçтарнă çĕрте те тăрăшăп, хампа пĕрле ача садне çÿрекенсене пичче вĕренекен шкула пырса курма калас шухăшăм та пур-ха... – пĕр чарăнми чĕвĕлтетрĕ сăмах-юмах çăмхине сÿтме юратакан Тăрăшар.



– Шухăшăрсене питех те ырламалла, – терĕ ачасен аслашшĕ. – Хам та пулăшатăпах ĕнтĕ сире. Унсăрăн епле-ха. Эсĕ, Темтепĕлейкин мăнукăм, мана чĕнетĕн пулĕ-ха шкула?

– Паллах, асатте, паллах. Тусăмсене хамăрăн ĕçсемпе паллаштарнисĕр пуçне çулçÿрев вăхăтĕнче тупнă юлташсен адресĕсене те парăпăр. Ан тив, вĕсем те пĕр-пĕрин патне çыру çырччăр, хăйсен пурнăçĕ пирки каласа паччăр. Çапла вĕт? – пысăк çын пекех шухăшласа илчĕ аслă мăнукĕ.



– Чăнах та, чăнах та... Çапла тăвăпăр, – ачасен кăмăлне татас темерĕ пулас Шурсухал. – Паян кăшт канса илер те çитес кунсенчех çулçÿревĕн юлашки маршручĕпе кайса килер. Вăл пире чи малтанах хамăр республикăн Йĕпреç тăрăхне илсе çитерĕ. Унтан Улатăр районне кĕрсе кÿршĕ Мордва Республикине каçса килĕпĕр. Питех те интереслĕ çул пулмалла.

– Мĕншĕн вара тавраран çаврăнмалла тет? – калаçăва татрĕ калаçма юратакан Тăрăшар. – Кĕске çул çук-и вара унта çитме?

– Чим, мăнукăмсем, кашни япалан хăйĕн йĕрки пур. Кăшт чăтăмлăрах пулсамăр çеç. Йăлтах йĕркеллĕ пулĕ. Ыран ирпе чи малтан Канаш хулине çитĕпĕр, унтан Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс ялне çул тытăпăр, – терĕ Шурсухал.

– Мĕншĕн вара унта, шăпах çав яла? – канăçне çухатрĕ Темтепĕлейкин.

– Вăт ку, мăнукăм, хальлĕхе вăрттăнлăх пулса юлтăр. Юрать?

Аслашшĕн сăмахĕнчен пĕр шит те иртме пултарайманскерсем тата ăна яланах итлеме хăнăхнăскерсем автобус чÿречинчен куç илмесĕр пăхса пычĕç. Тăван Чăваш ен илемĕ тыткăнларĕ вĕсене. Çырми-çатри, улăхĕ, çаранĕ, юханшывĕ... Кашни хăйне май илемлĕ те чипер. Куç тулли ялсем хăйсен капăр çурчĕсемпе илĕртеççĕ, яка та тÿрĕ асфальт çулсем çип пек тăсăлса выртаççĕ... Кĕçех вăрман тăрăхĕсем пуçланчĕç. Çурта пек тÿрĕ ÿсекен, тÿпенелле кармашакан хыр, чăрăш йывăççисене пăхнă чух пуç тÿпинчи çĕлĕк хывăнса ÿкмелле тейĕн. Çăра вăрман каш-кашлать.

## Пирĕн ентеш – çырулăха йĕркелекен

Умра – Ирçе Çармăс ялĕ. Акă шкул та хăйĕн вырăнĕнчех. Çак ялта 1875 çулхи сентябрĕн пĕрремĕшĕнче Илья Николаевич Ульянов тăрăшнипе икĕ класлă министерство училищи уçăççĕ. Унта икĕ çул вĕренмелле пулнă. 1931 çулта шкула çичĕ çул вĕренмелли туса хураççĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче вара шкулăн пысăк улшăнусем çине-çинех тенĕ пек пулса иртеççĕ. Çичĕ çул вĕренмелли шкултан 1961 çулта сакăр çул вĕренмелли йĕркелеççĕ. Тепĕр çул вара ăна вăтам шкул статусне параççĕ. Вăтăр тăватă çул каялла «Новая сила» колхоз пулăшнипе Ирçе Çармăсра икĕ хутлă вăтам шкул тăваççĕ.



Вăл ачасене хăйĕн ытамне илет.

– Асатте, ак çак палăка кама хисеплесе лартнă вара? – ыйтрĕç пĕр харăсах Темтепĕлейкинпа Тăрăшар аслашшĕн куçĕсенчен пăхса.

– Вăт шăпах çакăнтан пуçланать те пирĕн паянхи çулçÿрев. Çак палăка питĕ сумлă та хисеплĕ тĕпчевçе, халăха çутта кăларакана, мăкшă çырулăхне йĕркелекенсенчен пĕрне, паллă чĕлхеçе, фольклориста, этнографа, историке тата профессора халалласа лартнă. Вăл – Макар Евсевьевич Евсевьев. Макар Евсевьевич çак ялта 150 çул каялла, 1864 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче çуралнă, – паллаштарма тытăнчĕ Шурсухал мăнукĕсене.

Шăпăрлансене паллă çын çинчен нумай каласа пачĕ. Н. И. Ильминскийпе И. Я. Яковлев ун ĕçĕ-хĕлĕ, пултарулăхĕ çине пысăк витĕм кÿнине те пĕлчĕç ачасем. Ара, Тăрăшарпа Темтепĕлейкин Иван Яковлевич Яковлевăн юмахĕсемпе пĕчĕк калавĕсене пĕрре çеç мар юратса вуланă. «Мĕн тери интереслĕ юмахсем!» – тесе савăннине халĕ те астăваççĕ.

Çулçÿревçĕсене кÿршĕ республика халăхĕшĕн çак паллă çын мĕнле пысăк ĕçсем туни çинчен шкул вĕрентекенĕ тĕплĕн каласа пачĕ.

– Макар Евсевьевич, – терĕ вăл. – 1883-98 çулсенче пуçламăш шкулта арифметика тата вырăс чĕлхи вĕрентнĕ. Вăл мордва (мăкшă тата ирçе) букварĕ, вырăс чĕлхи учебникĕсем йĕркеленĕ. Хусан хĕвелтухăç педагогика институтĕнче мордва чĕлхипе, историйĕпе, этнографипе лекцисем вуланă. Мускавра тата Атăл тăрăхĕнче йышлă пурăнакан мордва халăхне вĕрентекенсен курсĕсене йĕркеленĕ. Вăлах çак халăх валли пуçласа тухнă «Красная звезда» хаçатăн пĕрремĕш номерне редакциленĕ. Унăн ашшĕ те, амăшĕ те хутла пĕлмен. Анчах халăх юррисене, ламран-лама куçакан юмахсене, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене питех те



аван пĕлнĕ. Пирĕн ентеш хăйĕн «Мордва туйĕ» чи пысăк ĕçĕсенчен пĕрне шăпах амăшĕ каласа панă пуян материалсенчен пухса хатĕрленĕ. Çак ĕç 1892 çулта «Живая старина» журналта пичетленет. Хĕр çураçнине, туя хатĕрленнине тĕплĕн çырса кăтартать. Хĕр хÿхлевĕн сăмахĕсене мордва чĕлхипе (вырăсла куçарса тата нотăсемпе) пичетлет. Тепĕр çултан, февралĕн 19-мĕшĕнче, Вырăс географи обществин вице-председателĕ П. П. Семенов-Тянь-Шанский пуян та паха материал çырса хатĕрленишĕн общество кĕмĕл медальпе чысласси не пĕлтерет. Чăваш, тутар, вырăс, калмăк тата ытти халăхсем пурăнакан Атăл тăрăхĕнчи нумай вырăнта пулса питех те пуян, кирлĕ материалсем пухать. А. А. Шахматов академик патне янă пĕр çырура вăл çак çулçÿревсенче мордва-вырăс словарĕ валли пуян ĕçсем пухма май килнине пĕлтерет. Халăх йăли-йĕркине вăл вăхăтра сăнÿкерчĕксенче сăнлама питех те йывăр пулнă. Апла пулин те Евсевьева икçĕр аллă сăнÿкерчĕк тума май килнĕ.

Тĕпчевçĕ çур ĕмĕре яхăн нумай яла çитме пултарнă. Хăйĕн сăнавĕсене çул кĕнекине çырса пынă, фонотека,



фототека йĕркеленĕ, калама çук хаклă этнографи экспоначĕсем пухнă. Халь вĕсем Хусан, Санкт-Петербург, Хельсинки, Саранск, Гамбург, Берлин, Тарту тата ытти нумай хулара упранаççĕ. Авалхи тумсемпе йăла-йĕрке, халăх сăмахлăхĕн палăкĕсем ерипен те пулин асран тухса пынине курса вăл «чĕрĕ авалăха» май килнĕ таран упраса хăварма тăрăшнă. «Кашни кун мордва пурнăçĕнчи чи хаклине çухататпăр!» – пăшăрханса та кулянса каланă Евсевьев.

Унăн шухăшĕсем, унăн ăслăлăх ĕçĕсем паян та халăхшăн хаклă, наукăшăн виçесĕр тупра вырăнĕнчех.

Вĕрентекен сăмахĕсене шыв сыпнă пек итлерĕç çамрăксемпе ватă. Чăвашран тухнă çакăн пек пултаруллă та паллă çын пурришĕн савăнчĕç те мăнаçланчĕç. Яланах шÿте ăнланакан Темтепĕлейкин ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртерĕ, çунат сарнăн вĕçсе каяссăнах туйрĕ хăйне.

Ирçе Çармăс шкулĕн вĕрентекенне чĕререн тав туса йыш Улатăр урлă Саранск еннелле çул хыврĕ.

## Саранск – илемлĕ хула

Мордва Республикин тĕп хули Саранск чăваш çулçÿревçисене ăшпиллĕн кĕтсе илчĕ. Кунта та вĕсем халăх пуянлăхĕн чи паллă вырăнĕсемпе паллашма тĕллев тытрĕç. Экскурсие Федор Ушаков адмирал ячĕпе уçнă кафедра соборне курма тытăннинчен пуçлас терĕç. Саранск хулине илемлетекен архитектура палăкĕсенчен пĕри шутланать вăл. Çак храм çÿллĕшĕ 54 метр, шалти лаптăкĕ тăхăрçĕр тăваткал метр. Пĕр харăсах икĕ пине яхăн çынна йышăнма пултарать. Атăл тăрăхĕнчи хуласенчи чи пысăк чиркÿсенчен пĕри шутланать.

Степан Эрзья ячĕллĕ ÿнер искусствисен музейĕ питех те паллă произведенисен тĕнчери чи пысăк управçи шутланать. Мордва халăхĕн ывăлĕ хăйĕн хушма ятĕнче тăван



çĕршывĕн ятне ĕмĕрлĕхе упраса хăварма пултарнă.

«Звезда Тысячелетия» фонтана мордвасем Вырăс патшалăхĕпе пĕрлешнĕренпе пин çул çитнине халалласа лартнă. Унашкал фонтан урăх ниçта та тупаймăн. Тĕрлĕ техника хăвачĕпе çутă вылять, кĕвĕ янăрать. Дубай е Лас-Вегасри «юрлакан фонтансемпе» танлаштарма та пулать ăна.

Мордовири чи авалхи Темников хулапа та паллашма кăмăллă. Кунта Федор Ушаков адмиралăн вилтăприйĕ пур. Çак ялтан инçех мар Дивеево ялĕ вырнаçнă. Унта Серафим Саровский çветтуйăн ÿчĕ упранать. Темников хула – çăра вăрман варринче. Çак вăрмана патшалăх сыхлать. П. Г. Смидович ячĕллĕ заповедникра туристсем юманлăхпа паллашма пултараççĕ, тĕлĕнмелле вăрман кÿллисенче канма та май пур.

Мордвасен этнокультура центрĕ Старая Теризморга ятлă ялта вырнаçнă. Кунта çичĕ çул каялла Раççей, Финлянди Президенчĕсем тата Венгри Премьер-министрĕ тĕл пулнă. Кунта курма килекен хăнасене яланах авалхи мордва юрри-кĕввипе кĕтсе илеççĕ, тĕлĕнмелле авалхи тĕрĕсемпе паллаштараççĕ. Тин çеç алĕçне хăнăхакан тĕрĕçĕсем хăйсен ăсталăхне кăтартаççĕ.

Степан Эрзья ĕçне паян çамрăксем малалла тăсаççĕ. Йывăçран тĕрлĕ кĕлетке касса кăларма е эрешсем тума Вăрманхĕрри Тавла шкулĕнче вĕренекенсем ăста. Вĕсен ĕçĕсемпе çĕршыв тата чикĕ леш енче ирттернĕ куравсенче паллашма май килнĕ.

Мордва Республикин культури пуян. Паллă та чаплă библиотекăсем, историпе краеведени музейĕсем кунта темиçе те. Леонид Иванович Воинов композитор ячĕллĕ урамсем Саранскра тата Темников хулисенче пур. Ун ятне вырăс халăх инструменчĕсен оркестрне панă. Мордва халăх юмахĕсене патшалăх пукане театрĕнче курса савăнма пулать.

## Ачасем алĕçне пĕчĕкренех хăнăхаççĕ

Саранск – пур енлĕн аталанса пыракан хула. Кунта 2018 çулта футболла выляса тĕнче Чемпионачĕ иртмелле. Ăна пур енлĕн хатĕрленме тытăннă та ĕнтĕ. Матчсем иртттерме çĕнĕ «Юбилейный» стадион тума тытăннă. Унта пĕр харăсах 45 пин çын футбол вăййине курма пултарать. Вăл стадион кăна пулмĕ, унта спортпа культура центрĕ те йĕркелеме палăртаççĕ. Лавккасем, супермаркетсем, ресторансем, теннис корчĕсем, баскетбол тата волейбол площадкисем хăйсен вырăнĕсене тупĕç...

– Асатте, мĕн тери хитре хула Саранск! Эпир ытти



çĕрте пулса курнă чухне унти тĕрлĕ халăх апат-çимĕçĕпе те паллашнăччĕ, тутанса та курнăччĕ, – терĕç ачасем.

## «Пирĕн шÿрпе. Вĕсен вара мĕн?»

– Унсăрăн мĕнле? Эпир те ак паллашăпăр тата астивсе те пăхăпăр, – шăпăрлансен кăмăлне хуçмарĕ Шурсухал. – Акă, мордва халăх кухнин ресторанĕ. Кĕрсе апатланар.

Официант меню килсе пачĕ. Мĕнле кăна апат ячĕ çук кунта! Цебярь шурьба (ырă пулă шюрпи), пъяньти, тувонь сывель максо марто (сысна ашĕпе пĕрле ăшаланă пĕвер), селянка, поза (сĕткен), арям (пылак шыв) тата тем те пĕр. Нумайăшне илсе çисе пăхрĕç. Питех те килĕшрĕ кухня.

Çулçÿрев вĕçленсе те пырать. Нумай çĕннипе, курманнипе паллашрĕç Темтепĕлейкинпа Шурсухал тата Тăрăшар. Сăнÿкерчĕк те темĕн чухлех турĕç. Çамрăксем мăн аслашшĕне пуян та интереслĕ экскурсишĕн чĕререн тав турĕç. Кĕçех вĕсем тăван Шупашкара автобуса ларса каялла çула тухрĕç.



Владимир ФЕДОРОВ (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.

# Атте туйра мар, вăрçăра пуç хунă...



Çулласерен тăван тăрăха, Куславкка районĕнчи Çĕньяла, васкать Зоя Ивановна Васильева. Çапла унта вăл кĕркуннеччененех пурăнать, хĕл каçма вара Шупашкара каять. Халь те акă тинтерех çеç таврăнчĕ. Акă çав кун та урамра лапкалапка юр çунине пăхса киленме чӳрече умне пырса тăчĕ. Йывăç çумĕнче ачасем вылянине куç илми сăнарĕ. Хаваслăскерсем патне пĕр арçын пычĕ. Хĕрлĕ калпаклă хĕрача ăна хирĕç чупса пычĕ те ыталаса илчĕ. «Ашшĕ пулас... Эх, эпĕ çак ача пек атте ытамĕнче куллен киленсе пурăнаймарăм çав. Тĕрĕссипе, унăн сăнне те астумастăп. Çакăншăн йăлтах ылханлă вăрçă айăплă. Ăна пула пиччепе иксĕмĕр нуши-тертне чылай куртăмăр. Çумра атте пулнă тăк ачалăх та йывăрлăхпа иртмен пулĕччĕ», – терĕ Зоя Ивановна. Чунне пусарас тесе çӳлĕк çинчи кивĕ тĕркеме илсе сĕтел çывăхнерех вырнаçрĕ. Ашшĕн, Иван Кирилловичăн, çырăвĕсене хăй çумне чăмăртарĕ те куçĕсенчен тăварлă куççуль юхса алли çине пăт-пăт тумларĕ...

Иван Кирилловичпа Таисия Федоровна Васильевсем телейлĕ пурăннă. Пăхса ытарайми ачисем, Кольăпа Зоя, çитĕннĕ. Шел, вăрçă тухсан пурнăç йăлтах улшăннă. Кил хуçине ырă пилпе фронта ăсатнă.

Салтак арăмĕн ĕне тытма вăйхăвачĕ пулман. Çапах тĕпренчĕкĕсене выçă усрас мар тесе качака туяннă. Ирирех ачисене тутлă ыйхăран вăратсах ăшă сĕт ĕçтернĕ.

Йывăр пурнăç ассăн сывлаттарнă вĕсене. Çимелли те, тăхăнмалли те пулман. Çуркуннепе кĕркунне кăна мар, хĕлле те çăпатапах çӳренĕ. Выльăха панă улăм юлашкипе çеç вутă хутнă. Пĕрене хушшине тулнă юр тинех кăшт ирĕлме тытăннă. Кăмака умĕнче хуранпа пĕçернĕ çĕрулмине сĕтел çине лартсан, унăн пăсне пула пасарнă маччаран пăт-пăт шыв тумланă. Анчах пӳрт ăшши вăхăтлăха çеç тăсăлнă, тепрер сехетренех йĕпеннĕ маччана пăрланнă... Пӳлĕме каллех сивĕ сывлăш тулнă.

Инкек çине синкек тенешкел, пĕр кунхине вĕсен кукамăшне машина таптаса кайнă.

– Ах, ачамсем, малашне мĕн курăпăр ĕнтĕ. Кукаму пурăннă чухне çавах самайрахчĕ. Малашне пурнăç тилхепине еплерех тытса пымаллине те пĕлейместĕп. Пĕрех хутчен аçу та çук вĕт, эсир те пĕчĕк. Ах, хăçан ӳссе укçа ĕçлесе илме тытăнăр-ши-и-и! – тесе куçĕсем хĕреличченех хӳхленĕ юратнă амăшĕ.

...Ашшĕн вилнĕ хучĕ килсен амăшĕ татăлса макăрнă.

– Ах, Турă! Йăван, пĕтерчĕ сана тăшман! Пĕтерчĕ-ĕ-ĕ! Ачусене курас ĕмĕтпе хыпса-çунса пурăнаттăн та... пулмарĕ санăн вĕсене ытамна илесси... Пулмарĕ. Ах, çав çĕр çăтман Гитлера! – хӳхленĕ ниçта кайса кĕреймесĕр.

Вăрçă чарăнсан яла арçынсем таврăнма тытăннă. Амăшĕ пушшех куççульленнĕ. Мăшăрĕн çырăвĕсене вула-вула татăлсах йĕнĕ.

– Мĕншĕн санăн, Йăван, тăван тăрăха каялла килме çулу пулмарĕ-ши? Урасăр, алăсăр е куçсăр пулсан та – эсĕ манăн мăшăр, ачасен ашшĕччĕçке! Ах, чунăм тӳсмелле мар ыратать, ăшра вут çунать, – тенĕ чĕтрекен аллисемпе çыру страницисене уçкаланă май.

Унтанпа шыв-шур нумай юхнă. Ĕнтĕ Зоя Ивановна та пенсире.

– «Астăвăм» кĕнеке тухсан тӳрех атте ячĕпе хушаматне шырарăм. Шел, куç тĕлне пулмарĕ. Паттăр салтакшăн темиçе йĕрке шеллени чуна çав тери ыраттарчĕ. Вăл та ыттисем пекех Тăван çĕршывшăн пуç хунă-çке. Ара, туйра мар, вăрçăра ĕмĕрлĕхех куçне хупнă манăн юратнă аттем. Вăл фронта тухса кайнă чухне эпĕ виççĕре çеç пулнă. Ăна пачах та астумастăп. Паян вара маншăн чи хакли – унăн пĕртенпĕр пысăклаттарнă сăнӳкерчĕкĕпе фронтран килнĕ çырăвĕсем. Урăх... урăх нимĕн те çук, – терĕ Зоя Ивановна тарăн шухăша путса.

## «Çырас терĕм çак çырăва...»



«Çырас терĕм çак çырăва Таиç мăшăрăмпа Коля ывăлăма, пĕчĕк хĕрĕме Зойăна тата аннене юратса... Таиç, 4-мĕш числора çырнă çырăва паян çеç, июлĕн 22-мĕшĕнче, илсе вуларăм. Куншăн мĕн тери хĕпĕртерĕм! Тавах.

Пурăнатăп аванах. Хăрамалли ним те çук хальлĕхе. Çавăнпа та ан кулянăр. Таиç, эсĕ ман пата килес ĕмĕтлĕ. Паллах сана хамăн та питĕ курас килет. Паян сире тĕлĕкре куртăм.

Тархасшăн, хăв ĕçне пăрахса инçе çула ан тухсам. Кайран ăçта вырнаçăн? Кунашкал ĕç урăхран тупаймăн та. Пĕр вырăнтан тепĕр çĕре сиккелесе çӳреме хушмастăп сана. Май килсен посылка ярса параймăр-ши?

Пире кунне виçĕ хутчен яшка, пăтă параççĕ. Пурăнма пулать пек. Мана ачасен сăнӳкерчĕкĕсене ярса парсан та тем пекех хĕпĕртенĕ пулăттăм. Йывăр вăхăтра вĕсем çине пăхса савăнам».

«Кашни ирех почтальонкăна куратăп. Хама çыру парса хăварассăн туйăнать те вăл иртсе кайиччченех ăна сăнатăп. Шел, халĕ те сиртен çыру илеймерĕм. Хыпар пĕлес килет пулин те. Час-час сире тĕлĕкре куракан пултăм, савăнатăп вара. Вăрансан чун тӳсмелле мар ыратать. Ара, эпир пĕрле мар-çке. Ну, ывăлăм, Коля, шкулта лайăх вĕрен. Ухмах ан пул. Тăнлисене çеç пурнăçра çăмăл. Хам килте пулнă-тăк сана хутла лайăх вĕрентеттĕм. Анчах ним тума та çук. Çав шуйттан нимĕçсене телейлĕ вăхăта туртса илчĕç. Ылханатăп вĕсене. Тен, кам пĕлет, тăван тăрăха чиперех таврăнăп-ха. Ун чухне питех те телейлĕ пулăпăр.

Çĕрулми мĕн чухлĕ кăлартăр? Хĕл каçмалăх çитет-и? Эх, пĕррехинче хамăн юратнă çемьепе сĕтел хушшине вырнаçса çĕрулмие уйранпа сыпса çиесчĕ. Çакă манăн чи пысăк ĕмĕт».

«Симĕс хулара, симĕс чăрăш айĕнче питĕ лайăх пурăнатăп. Анчах кашни кун çумăр çăвать. Ниçта тухса кĕме çук. Йăлт шыв, пур çĕрте те. Пахча çимĕçсенчен мĕн акма ĕлкĕртĕр? Таиç, кирек епле пулсан та колхозра ĕçлеме тăрăш».

«Ачасене чипер пăхса ӳстер. Кольăна шкулта лайăх вĕрентесси пирки те ан ман. Унăн çĕршыва юрăхлă çын пулмалла. Хытăрах тыт эсĕ ăна.

Паян чиперех пурăнатăп, ытти кунхи пирки вара калама пултараймастăп. Сывă пулсан ыран каллех çыру çырма ларăп. Кĕтсех тăрăр».

«Çĕрпӳртре çурта çути ялкăшать. Ĕмĕтре эпĕ килте, сирĕнпе юнашар. Анчах ăшăмра вут çунать. Чăтмалла мар сире курас килет. Шурă хута çыру çырас тесе илтĕм. Чуна пусарас тесе алла ручка тытрăм. Андриян тăванăм пирки шухăшласа та кулянатăп. Вăл ылханлă вăрçăра пуç хунă. Ачисене питĕ шел. Тăлăха юлчĕç, урăх нихăçан та ашшĕ ăшшине туяймĕç вĕсем».

«Пире укçа кирлĕ мар. 420 грамм сухари параççĕ. Икĕ стакан яшка та лекет. Кунта укçапа нимĕн те илес çук. Май пулсан ачасемпе сăнӳкерĕнсе ярса пар-ха. Хам та ӳкерĕнсе ярса панă пулăттăм, анчах кунта фотограф тавраш çук».

«Хальлĕхе лайăххах, ыранхи пирки вара ним калама та пĕлейместĕп. Эпир ăçтине хăвах пĕлетĕн-çке. Темле, хам пурнăçра сире курайăп-ши? Пĕрре те курассăн туйăнмасть. Таиç, пирĕн иксĕмĕрĕн телее йытă çисе кайрĕ пулĕ терĕм... Пĕлетĕн-и, эпĕ киле таврăнас пулсан манран савăнăçлă çын пулмĕччĕ».

«Çанталăк ăшă, тумла юхать. Манăн ăшăмра вара вут çунать. Ялкăшсах. Сире чунтан-чĕререн курас килет. Тем чухлĕ ĕмĕтленсе çунсан та тĕл пуласси иккĕленӳллĕ. Хĕвел анăç енчен пăшалпа тупă сассисем илтĕнеççĕ. Шуйттан Гитлерне вĕлересшĕн. Хăйне те кун çитĕ, шăпи тулĕ. Ăна леш тĕнчене ăсатсанах пурнăç аванланĕ. Лайăх пурăнма ачасене те ирĕк пулĕ. Пĕрремĕш посылкăшăн тав! Иккĕмĕшĕшĕн – вăрçатăп! Ара, ачасен те çимелле вĕт. Атя, пĕрпĕрне çилленместпĕр. Хутаçра унччченхи сухари те пур-ха. Мана ярса панине вара тĕпренчĕкĕмĕрсем те юратсах активнĕ пулĕччĕç».

«Эпир пĕр яла вырнаçрăмăр. Кунта нимĕçсем йăлтах çуртсене çунтарса пĕтернĕ. Хăрушă! Ыран каллех малалла, çĕнĕ çĕрелле, кайăпăр».

«Таиç, ак çак çырăва алла илсе вуласан куçран куççуль шăпăртатрĕ. Киле пырса сĕтел хушшине ларса курасчĕ...»

➲➲➲ 9-мĕш стр.



«Ывăлăм, Коля, шел сана. Эсĕ тата мĕншĕн 5 çул аслăрах пулман-ши? Эпĕ сана нумай япалана вĕрентсе хăварнă пулăттăм. Чунăм çунать. Анчах ăна нимпе те лăплантарма çукçке. Эх, хăвăртрах киле таврăнса сирĕнпе пуласчĕ. Ĕнер уяв пулчĕ. Çак ятпа чылайăшĕ килтен посылка илчĕ. Эпĕ те кĕтрĕм, хисеплесе ярасçех тесе шухăшларăм. Шел, манăн ĕмĕт пурнăçа кĕреймерĕ. Килтен посылка çитмерĕ... Эпир пĕчĕк чухне аннен 4 ачаччĕ. Кĕркунне сĕлĕ вырнă чухне: «Ачасем, вырăр, вырăр, Пукрав ярмăрккинчен арбуз илсе парăп», – тесе хавхалантаратчĕ. Ун чухне пĕчĕк пулнă çав эпир. Тĕрĕссипе, ăна илсе пама вăйĕ те çитеймен ĕнтĕ унăн. Халĕ эпĕ пысăк, тен, посылка ямanни – тĕрĕсех те. Сире йывăр пулнине питех те ăнланатăп».

«Алла тытрăм шурă хутпа кăранташ, шурă хута тĕрлеме. Çантalăк ăшă. Юр çавать, чунра вут çунать. Кайăк пулăттăм та сире пырса курăттăм. Çунат айĕнче çемьене ăшăтăттăм. Хам çиес апата сире панă пулăттăм. Халĕ эпĕ сирĕншĕн хурчка вырăнĕнчех пулĕ, ялан посылка ыйтса тăратăп та. Пире кĕçех преми памалла. Енчен те мана тăшман пульли вĕлерсен укçана ыйтса çырса ярăр».

«Нимĕçсене хăваласа кăлартăмăр. Эсир çак вырăна курас пулсан тĕлĕнсех кайăр. Хулипе те пĕр çурт хăварман. Çунтарса та сирпĕтсе пĕтернĕ. Çавăн пек çĕлен-калтана çĕр епле чăтатьши? Ĕнер пире кино пленка çине ÿкерчĕç. Тен, эсир те курма пултаратăр ăна. Астăвăр, лайăх тинкерĕр, иккĕмĕш ретре эпĕ тăратăп. Мана «Хастарлăхшăн» медаль парас шанчăк та пур терĕç. Паян список йĕркелерĕç. Унта ыттисемпе пĕрле ман хушамата та çырчĕç. Ыран пире мунча хутса кĕртетпĕр терĕç. Вунă кун ĕнтĕ урасем ăшă мĕн иккенне пĕлеймесçĕ. Ах, мунчара рехетленетпĕрех ĕнтĕ».

«Коля ывăлăм вĕренÿре епле унта? Кала эсĕ ăна, тăрăшсах ăс пухтăр. Таис, тархасшăн, маншăн ан кулян. Чĕрÿнe шелле. Йăлтах йĕркеллĕ. Мĕн кирли пурте пур. Çителĕклĕ. Урара та, çирере те аван. Паян сывах. Çитес вăхăтра Гитлера хăваласа ярсан, тен, киле таврăнатăпах. Тем пекехчĕ».

«Ыран валли пĕр котелок серте татса хутăм. Çак çырăва халĕ вăрманта çыратăп, кăвайт умĕнче. Ыран ку тăрăхран урăх çĕрелле каятпăр пулас. Сывă юлсан тепĕр 2 кунран каллех çыру ярăп. Сывă юлсан çеç. Вилес пулсан вара... эпĕ мĕншĕн куç хупнине чухлатăн. Çĕр çăтман шуйттан Гитлера пула паллах. Хăçан çав ылханлăскерсене хамăр тăрăхран хăваласа кăларăпăр-ши? Ун чухне тинех лăштах сывласа янă пулăттăмăр. Вара утса мар, вĕçсе çитĕттĕм тăван тăрăха. Чăнах, енчен те эпĕ киле таврăнаймасан, тархасласа ыйтатăп, манăн япаласене пăрахăçа ан кăлар. Ывăлăм Коля ÿсет вĕт, вăл тăхăнса çÿретĕр ашшĕне аса илсе. Эпĕ вилсен... Виçĕ çул иртмесĕр качча ан кай, Таис... Тен, çав виçĕ çул хушшинче таврăнăп-ха сывах. Тен, уксах... Тен, чăлах... Тен... Пĕлетĕн-и, Таис, манăн пачах та вилес килмест...»

«Нимĕçсем, вăрă-хурахсем! Хресченсене çаратаççĕ. Пĕр шелсĕр япалисене илсе тухса каяççĕ. Нимĕн те хăвармаççĕçке чуниллисем. Кунтан та хăрушши – ватă çынсемпе ачасене сарайне хупса çунтарса яни те, пере-пере вĕлерни те пулнă».

«Хама телейлĕ тесе шухăшлатăп. Нимĕçсем мана темиçе хутчен те «кĕрекене» лартма тăчĕç. Ĕç ăнмарĕ вĕсен. Эпĕ хăтăлтăм. Хаçатра вуласа пĕлнĕ тăрăх кĕçех Гитлер каялла чакса тарĕ. Тем пекехчĕ. Ах, киле пырас килет, чăтмалла мар.

Коля ывăлăм, аннÿ сăмахне итле. Пируспа ĕмĕрне те ан туслаш. Эсĕ халĕ сакăр çулта, эпĕ вара вăтăр çиччĕре. Апла пулсан та паянхи кунччен çав пируспа айкашман. Аннÿпе мана итлемесен ятлăп сана, хытă. Аслисен сăмахĕнчен иртекенсене чăтма пултараймастăп, юратмастăп та. Авă пирĕн пурнăç кунта шыв юххи пек. Паян кунта, ыран – лере, тепĕр кун – таçта...»

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

# Асаттен парни – пирĕн килте



Йĕпреç районĕнчи Пучинке шкулĕн саккăрмĕш класĕнче вĕренекен Ирина Яковлева – вĕренÿ отличници. Пур предметпа та «5» паллăпа ĕлкĕрсе пыраканскер çутçанталăка юратать. Кĕркунне çывăхри вăрманта уçăлса çÿренисĕр пуçне сарă-хĕрлĕ çулçăсене пуçтарма кăмăллать. Хĕллесерен уй тăрăх йĕлтĕрпе çÿресси – чун иленĕçĕ. Кĕçех Çĕнĕ çул çывхарать, анчах тавралăх шурă кавирпе витĕнейменрен çав тери пăшăрханать Ирина. Пушă вăхăтра вăл вăрçă çинчен кĕнеке вулама тăрăшать.

– Килес çул Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе çитмĕл çул çитет. Пирĕн, шкул ачисен, пысăк уяв иртермеллех май уйăхĕн 9-мĕшĕнче. Асаттесемпе кукаçисене асра тытса чуна витермелли сăвăсем каламалла, палăк умне чĕрĕ чечексем хумалла. Ку – пирĕн тивĕç. Фронтра пуç хунă салтаксене ĕмĕрне те манăçа кăлармалла мар, вĕсен çутă сăнарĕсем яланах асăмра пулмалла, – çирĕплетет хĕрача.

Ку сăмахсене ахальтен каламасть Ирина. Мăн аслашшĕ, Яков Семенович Семенов, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăррăн кĕрешнĕ. Хастарлăхне кура ăна çĕвĕ машини парнеленĕ. Тăван тăрăха чаплă парнепе таврăннă фронтовик. Çак тĕлĕнмелле хыпар ял тăрăх çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлнă. Пурте Яков Семеновичăн çĕвĕ машинине курасшăн ăшталаннă.

– Ах, хăрах куçпа та пулин пăхса илесчĕ чаплă парнене! Вара тумтир таврашне çав машина хăех çĕлет-и? Кай, ĕненес килмест. Ара, ун пеккине чăн пурнăçра мар, тĕлĕкре те тĕлленмен! Чăнах, мĕнле япала-ши вăл? – тенĕ ял çыннисем пĕр-пĕринпе сăмахласа.

Çапах та, пурне те пĕлесшĕн, курасшăн çунакансем Яков Семенович патне сăлтав тупса кайнă. Сĕтел çине вырнаçтарнă çĕвĕ машинине курсан пĕççисене шарт! çапнă вĕсем. Тĕлĕннине пытараймасăр парнене аллисемпе сăтăркаласа та пăхнă.

– Чаплă, хăватлă! – тенĕ кĕскен.

Хăшĕ-пĕри вара хăюлăх çитерсе çак пысăк парнене хаклă хакпа сутма тархасланă, анчах паттăр салтак яхăнне те яман.

– Э, çу-у-ук! Хам çÿллĕш ылтăн купи купаласан та, памастăп хамăн парнене никама та! Урăх ан та тилмĕрĕр. Чуна çеç ыраттаратăр! – хирĕçленĕ самантрах фронтовик.

Яков Семенович тахçанах çут тĕнчерен уйрăлса кайнă ĕнтĕ, çапах та унăн япали пуриншĕн те чи хакли шутланать.

– Мăн асаттене сăнÿкерчĕк тăрăх кăна пĕлетĕп. Шурă сухаллăскере ял-йыш хисепленĕ, ăслă канаш ыйтма та ун патнех васканă. Халĕ унăн çĕвĕ машинипе эпĕ те савăнсах усă куратăп. Хитре пусмасенчен хама валли сумка, юбка çĕлетĕп. Питĕ килĕшÿллĕ пулать пек. Анне ыйтнипе минтер пичĕсене те çĕнетрĕм. Унччен юратнă пуканесем валли тумтир та çĕлеттĕм. Ара, вĕсене те илемлĕ кĕпе, кофта, шăлавар тăхăнтартас килетчĕ-çке. Кăшт ÿссен тата хитререх япаласемпе савăнтарăп-ха килтисене. Тепĕр чух Антон шăллăм та юнашар вырнаçса ларать те эпĕ ĕçленине куç илми пăхса сăнать. Калаçма юратаканскер вун-вун ыйту парать. Шкула çÿреме тытăнсан эпĕ ăна çак çĕвĕ машини пирĕн киле епле майпа лекнине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлтерĕп. Туятăп, вăл та ун чухне асатте çинчен каланине тимлесех итлĕ, – тет Ирина мăнаçланса.

*Элиза ВАЛАНС.*

Йĕпреç районĕ,
Пучинке.

## Паттăрсене мухтав!

Çуллахи шăрăх кун. Ирхине,
Çамрăк çын васкасан ĕççине,
Урампа пынă чух хăрушла
Илтĕнет çак хыпар радиора.

– Юлташсем! Чикке пăсрĕç фрицсем!
Пĕр çын пек кар! тăрар çапăçма.
Çамрăк çын хыпара кĕç илтсен,
Вăл тĕв турĕ фрица тавăрма.

Юнлă вăрçă пырать таврара,
Аманать çамрăк çын вăрçăра.
Сипленсе кĕç тухать эрнерен,
Вăл васкать фашиста пĕтерме.

Пăрлă шыв, шартлама сивĕ те,
Çумăр пек тăкăнсан та пульли –
Боеца илеймен нимĕн те,

Медальсем вара кăкăр тулли.
Йăвинче пĕтерсе ирсĕре
Тăнăç пурнăç парайрăр пире.
Çĕнтерÿçĕ салтак, эп сана
Манас çук, сывă пул ĕмĕре!

*Диана ЗУБКОВА.*

Етĕрне районĕ,
Мăн Чураш.

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Чĕрере – хĕлле

Хĕлле. Тĕнче шуралчĕ.
Пас тытнă йывăçсем.
Çул-йĕр шăнса пăрланчĕ.
Каç. Тăлăх урамсем.

Пĕччен эпĕ утатăп,
Пин шухăш ман пуçра.
Мĕн тупасса шанатăп
Эп хамăн пурнăçра?

Пит тăвăрланчĕ чунăм!
Анчах никам сисмест...
Хавассăр, тĕксĕм кунăм
Телей мĕнне пĕлмест.

Пĕр шурă хĕл сиввийĕ
Тăван пек çупăрлать.
Вĕрисĕр çут хĕлхемĕ
Ман ăшăмра çунать.

Пĕр тăлăх ыр урамăм
Шутлать утăмсене.
Çил-тăвăлпа çын уйрăм,
Эп çеç унпа пĕрле.

Мĕскер-ши мана пулчĕ?
Камран тĕпчес пĕлме?
Е ыйтмасан та... Туйрăм:
Ман чĕрере – хĕлле.

*Ирина ПАВЛОВА.*
Йĕпреç районĕ,
Çирĕклĕ.



*Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ÿкерчĕкĕ.*

## Пуç таятăп сире...

Хĕç-пăшалĕ хыттăн янăрать,
Тусан, тимĕр шăрши таврара.
Танк та, самолет та вăркăнать
Çак тискер те усал вăрçăра.

Нумай-нумай çул тискер тăшман
Хура çунатпа хупăрларĕ пире.
Анчах пурпĕр паттăр халăх ман
Парăнмарĕ, сутмарĕ чунне.

Çак юнлă та тискер вăхăта
Манаймастпăр эпир нихăçан.
Пире панăшăн çак пурнăçа
Пуç таятпăр сире çĕр таран!

*Маргарита ПОРФИРЬЕВА.*
Муркаш районĕ,
Çĕньял Оринино.

## Ашкăнчăк тусăм

Манăн пĕчĕк йытă пур,
Маншăн вăл питех маттур.
Аттепе çÿрет хире,
Çитерет куян пире.

Ывăнса килсен вара
Çывăрать вăл пĕр кана.
Тутлă ыйхи тăрансан
Тарса ÿкеймĕн унран.

Пĕр-пĕрне хăваласа,
Вăй виçетпĕр ăмăртса.
Питĕ хытă чупнăран
Савăнатпăр унпалан.

Анчах япăх енĕ пур:
Чăхсене куян пекех
Хăвалать кунсеренех,
Майран сыртать, ай-тур-тур!

Килĕр курма ман пата
Çакă ашкăнчăк йытта.

*Кристина КОШКИНА,*
*5 класс.*
Комсомольски районĕ,
Нĕркеç шкулĕ.

## Сип-симĕс хум ăса витерчĕ...

Куккук сас пачĕ те, шутларăм,
Пĕлтерчĕ пуль çу çитнине тесе.
Çав кун ăна татах тăнларăм
Хăй евĕр кĕвĕрен пит тĕлĕнсе.

Çу ăшшине савать пуль теттĕм
Пирвай илтсен куккукăн сассине.
Эп тĕрĕсне кайран илтсеттĕм:
Вăл йăпанма çеç чĕннĕ-çке тусне.

Калама çук тавра илемлĕ,
Ырăлăхпа пиллет хитрелĕхне.
Мана савăнтарса кÿрет киленĕç,
Асилтерсе чăвашăн масмакне.

Çĕнелчĕ вĕт мĕнпур тавралăх,
Хуртсем вĕçеççĕ çеçкесем çине.
Хĕвел ав тăсмака уралла.
Шалча вĕçне çакман-ши, тен, хăйне?

Сип-симĕс хум ăса витерчĕ,
Чĕртсе тăратрĕ иртнĕ кунсене.
– Утă çинче çуралтăн, – тетчĕ,
Ырлатчĕ пит çу кăмăлне анне.

*Лев МЕДВЕДЕВ.*
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Тури Çĕрпÿкасси.

## Анне

Манăн анне чи хитри,
Чи илемли, маттурри.
Эпĕ ăна юрататăп,
Лайăххи кăна сунатăп.
Пултăрччĕ манăн анне
Чи телейли çĕр çинче.

*Света ЕГОРОВА,*
*5 класс.*
Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.



*Наташа ЕМЕЛЬЯНОВА (Вăрнар районĕ, Вăрнарти 2-мĕш шкул) ÿкерчĕкĕ.*

## Тăван чĕлхем

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхем!
Епле хитре-çке эсĕ манăн.
Кашни сăмах тухать çемçен
Тата илемлĕн, янăравлăн.

Тăван чĕлхе – ман пурнăç та.
Çук пулĕ сан пекки ниçта.
Эс – пин-пин юрă упраканĕ,
Пин сăмахпа калаçаканĕ.

Сана халалласа çынсем
Нумай хайлаççĕ сăвăсем.
Эс чечеклен аталанса,
Çĕршывăма савăнтарса.

Чăваш чĕлхи – тăван-çке ман.
Сана эп манмăп нихăçан.
Эс маншăн ылтăн выранне,
Телей кÿретĕн чĕрене.

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе!
Атте-анне вырăнĕнче.
Вĕсем пекех эпир сана
Пурнатпăр юратса, савса.

*Ирина ВАСИЛЬЕВА.*
Канаш районĕ,
Атнаш.

## Чун-чĕререн

Аннене эп юрататăп,
Яланах савăнтаратăп:
«Пиллĕк» паллăпа кăна
Вĕренетĕп-çке шкулта.

Аннене эп пулăшатăп,
Чашăк-тирĕк те çăватăп,
Вырăнсене пуçтаратăп,
Чăх-чĕпе те хам пăхатăп.

Уяв çитсенех ялан
Саламлатăп кăмăлтан.
Ан чирлетĕр нихăçан,
Пурăнтăр çĕр çул таран.

*Снежана МУЛЛИНА,*
*7 класс.*
Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.



*Лена ГАЛКИНА (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Шĕнерпуç) ÿкерчĕкĕ.*

## Шăп каç. Тавралăх ыйхăра

Сив каç. Ав йывăç та пасарнă.
Таçта вăрман таврашĕнче
Ват кашкăр уйăх çутинче
Хăй выçлăх юррине пуçланă.

Кашкăрăнни пек тĕнчере
Пĕр хуçăк чун ыйха путман-ха.
Телейлĕ, лăпкă çемьене
Çак чун ак вунă çул курман-ха.

Тÿлек каçсем, килти ĕçсем
Çак çамрăк хĕршĕн пач та ют.
Тахçан ачалăх кунĕсем
Телейлĕ пулнă ун, çап-çут.

Анчах вăрçа пула йăлт пĕтрĕ,
Çемье ăшши çухалчĕ хăвăртах.
Халь вăл пĕччен – малашлăх çĕтрĕ.
Тин вăрçă кунĕсем те хыçалтах.

Ик выçă чун, телейсĕр ик шăпа,
Хĕллехи каç юрларĕç çĕр çурса.
Сив каç пĕлмерĕ хĕрхенме ик тăлăха –
Шартламине вăл тăсрĕ малалла.

*Анастасия МУРАШЕВА.*
Вăрнар районĕ,
Пăртас.

## Асаннеçĕм

Асаннеçĕм, асанне,
Эс кала-ха чăннине:
Мĕншĕн юр çăвать хĕлле?
Кун хыççăн пулать çĕрле?
Эп пĕлесшĕн хуравне.
Пулăшсамччĕ, асанне.
– Эс, мăнукăм, ан васка.
Тимлĕ пулсам урокра.
Тупăн вара хуравне
Пĕлÿ аслă тĕнчинче.

## Юмахри тĕнче

Тĕлĕнтермĕш урамра
Хĕл пуласшăн-çке хуçа.
Хăйĕн сивĕ аллипе
Ыталанă тĕнчене.
Шеллемен вăл хурăна,
Йăмрана та чăрăша
Сапнă кĕмĕл мерченне –
Вăл пасартнă вĕсене.
Юмахри пек халь тĕнче
Хĕлĕн сив ытамĕнче!



*Алексей ОСИПОВ,*
*2 класс.*
Муркаш районĕ,
Нискасси шкулĕ.

## Чи юратнă çын

Чи юратнă çын вăл – ман анне.
Пуç таятăп унăн кăмăлне.
Пĕр канмасăрах ĕçлет,
Тăрăшать вăл, хĕрхенет.
Ун сăмахĕ те юрри
Ылтăнран та хаклăрах.
Тĕнчере анне пурри
Перинчен те лайăхрах.
Çут тĕнче, анне-аннеçĕм,
Санпала илемлĕрех,
Нумай-нумай пурăн эсĕ
Пĕртте чирлемесĕрех.

*Анжела МУЛЛИНА,*
*7 класс.*
Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.

## Çутçанталăк тата этем

Çутçанталăк этеме упрать.
Шеллемест хăй пурлăхне, парать.
Çаралать вăрман, пушанать уй-хир –
Темшĕн илтĕнмест кайăксен юрри?

Этем – чи вăйли çутă тĕнчере.
Ун алли ватать – юлмасть нимĕн те.
Мĕншĕн çавăн пек шелсĕр пулмалла,
Çутçанталăка пĕтме памалла?

## Чăваш вăрманĕ

Пĕр хĕрача вăрманпа утать,
Ун умĕнче сукмак выртать.
Ав пĕчĕк чăрăш, ват йăмра –
Лараççĕ çиле майăн тайăлса.

Лаштра йăмра çап-çамрăк чăрăшпа
Ларать çапла мăнаçлăн кашласа,
Е вăхăт-вăхăт шухăша каять,
Туратсене çĕре çити усать.

Ун умĕнчех шап-шурă хурăн,
Курсассăн калăн, вăл – чăн-чăн пике.
Эс айккинчен сăнасарах та пăхăн:
Кăтра турачĕсем епле хитре!

Илемлĕ-мĕн пирĕн енчи вăрман –
Кун пеккине эп халиччен курман.

*Мария ГРИГОРЬЕВА.*
Çĕмĕрле районĕ,
Юманай.

## Пĕртен-пĕрскер

Тăван анне пуриншĕн те пĕрре,
Ăна ялан упрасчĕ чĕрере.
Йăл кулă çиçтĕр унăн питĕнче
Çак хătлă та илемлĕ çĕр çинче.

Эс пурнăç парнелетĕн-çке пире
Пулмашкăн пысăк çын çак тĕнчере.
Ăс-тăн паратăн, ÿстеретĕн,
Телейлĕ çул пире пиллетĕн.

*Марина ЛАСТОЧКИНА,*
*7 класс.*
Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.

*Куçма ТУРХАН*

# Çӳллĕ иккен Хусан хӳмисем

Аслă князь хăйĕн патĕнче çичĕ çула яхăн службăра тăнă Едигера, ун сăн-питне, ун сăмахĕсене аса илме тăрăшать. Мĕнле этемччĕ-ха вăл пӳ-сийĕпе, пичĕ-куçĕпе, мĕн пур курăмĕпе? Вăтам пӳллĕ хыткаланка кăна çынччĕ пулас. Куçĕсем хăйĕнпе калаçакан çынран тархасласа тем ыйтнă пек пăхатчĕç. Кулнă чухне вăл ялан шап-шур вĕтĕ шăлĕсене кăтартатчĕ. Çине Едигер Гирейсем пек пулас тесе аркине ылтăн хăю тыттарнă кăвак халат тăхăнатчĕ. Унăн ашшĕ, Касум, çирĕм çул каялла Астрахане илнĕ чухне вилнĕ тетчĕç. Пĕр çулхине Едигер Хусан патне похода та ермешсе пычĕ. Астраханьри ĕçсем çинчен темиçе хутчен те калаçнă пек астăвать унпа. Черкке шаккаса пĕрре çеç мар эрех те ĕçнĕ пуль.

Виçĕ çул каялла Едигер ним систермесĕр-тумасăр Нухай ордине Юсуф князь патне тарчĕ. Мĕн туса пурăннă вăл унтанпа Нухайра – аслă князь ăна-кăна нимĕн те пĕлмест.

Ак халь çав Мухаммед Касымов Едигер, çичĕ çул аслă князь çăкăрне çисе пурăннă çын, Хусанта патша пуласшăн. Юсуф çыннисем пилĕк çĕр çынлă отрядпа ăна тутарсен Атăл хĕрринчи шĕкĕр хулине илсе пынă, ак сан валли хăтлă вырăн, ыр курса пурăн, анчах пире ан ман тесе престола лартнă. Чапкун Отуча, йăпăлтатма Мускава темиçе хутчен те килсе кайнăскер, Едигер аталăхĕ пулса тăнă.

Юсуф князь, ватă тилĕ, Хусан престолне çухатасшăн мар иккен-ха. Усал лаша пек, сыртать те тапать, тапать те çыртать, аякран.

Мĕнех вара тет Иван Васильевич, эсĕ пире сăтăр тума унта хăвăн çыннусене ярасшăн пулсан эпĕ те санран ӳксе юлмăп, Хусан престолĕ валли хам çынсене хатĕрлĕп. Вăл юрта тытса тăма манăн тивĕçĕм саннинчен ытларах. Эсĕ ăна илсе курман-ха, манăн асатте утмăл пилĕк çул каяллах илнĕ Хусана, çавăн чухнех унта хăйĕн çыннине патшана лартнă.

Аслă князь патĕнче вăл чĕнтернипе килнĕ патша ывăлĕсем виççĕн ларассĕ: Крым ханĕ пулма ĕмĕтленекен Юнус, Астрахань патшин ывăлĕсем Каз-Булат Тохтамышпа ун шăллĕ Абдулла. Амăшĕсем урăх пулнă пулсан та ашшĕ енчен вĕсем Едигер тăванĕсемех ĕнтĕ. Асту, Едигер, сана хăваласа ярсан вĕсенчен кашнинех сан вырăна йышăнса хан пулма пултарать. Ку вăл Шигалее шутламасăр. Ылтăн ордара тĕрлĕ вăхăтра хан пулнă виçĕ Ахмата тăван тивекен Шигалейĕн Хусан престолне йышăнма мĕнле тивĕç пуррине вăл юртра пурте пĕлеççĕ.

Аслă князь Астрахань патшин ывăлĕсемпе кăшт калаçрĕ те алăк умĕпе Адашев иртнине курса тепĕр пӳлĕме тухрĕ. Çав вăхăтра апат çимелли палатăна – патша çумĕнчи Совета боярсемпе воеводăсем, думнăй çынсем, патша дьякĕсем пуçтарăнма тытăнчĕç.

Кăшт кĕттернĕ хыççăн палатăна Иван Васильевичпа ун икĕ шăллĕ кĕчĕç. Аслă князь хăйĕн вырăнне – варринчи çӳллĕ хысçлă тенкел çине ларчĕ, унран сулахаен енне Астрахань патшин ывăлĕсем, сулахай енне шăллĕсем вырнаçрĕç. Юнашарах тата патшан духовнăй ашшĕ Сильвестр священник пырса тĕршĕнчĕ.

Хурчка куçĕсемпе пĕтĕм палатăна пăхса çаврăнса Иван Васильевич калаçма хатĕрленсе тăчĕ. Пурте шăпăрт пулчĕç. Аслă князь кĕлĕ сăмахĕсемпе пуçларĕ:

– Эпир пурсăмăр та турă çыннисем. Турă пире ырлăх парать. Хамăрăн мĕн пур ĕмĕте эпир çĕрпе пĕлĕте тытса тăракан турă çине хуратпăр, – сăмахсене васкавлăн сапрĕ вăл. Унтан аслă князь сасси сасартăк улшăнчĕ, тĕрекленчĕ. – Манăн государь – шăллăм Юрий, манăн юратнă шăллăм Владимир! Пирĕн хаклă хăнасем – патша ывăлĕсем тата мĕн пур боярсем, воеводăсем, советниксем! – хавхаланнăçемĕн хавхаланчĕ патша. – Ман сăмаха итлесемĕр, эпĕ сире питех те кирлĕ япала çинчен пĕлтересшĕн. Пĕтĕм Русь митрополичĕ, пирĕншĕн кĕл тăвакан Макарий митрополит сĕннипе тата хамăр хушшăмăрта калаçса татăлнă тăрăх, эпир тахçанах хамăршăн тăшманла юрта, агарян патшалăхне парăнтарма тĕллев тытнăччĕ. Ку тĕллев çинчен эпĕ сире паян тепре аса илтересшĕн, мĕншĕн тесен Хусан княçĕсем халĕ те пире хирĕç усал ĕçсем тăваççĕ. Хусан çыннисем пире нумай-нумай çул хушши улталаса пурăнчĕç, халĕ те улталама пăрахмаççĕ-ха. Эпĕ паян сиртен çапла ыйтасшăн: вăрçă вăрçмалла-и Хусанпа, вăрçмалла мар-и? Эсир мĕнле калатăр, эпĕ çавăн пек тăватăп.

– Вăрçмалла! Вăрçмалла!

– Аркатса тăкмалла çав агарянсен патшалăхне! – кăшкăрчĕç боярсемпе воеводăсем, думнăй çынсемпе тĕрлĕ советниксем. Патша ывăлĕсем çеç сăвар уçмасăр ларчĕç, вĕсем кунта ют çынсем кăшкăрашни пĕрре те килĕшмест терĕç курăнать.

– Юрĕ, çапла пултăр. Совет ячĕпе вăрçă пуçлама йышăнăпăр, – хăйĕн татăклă сăмахне каларĕ государь.

Çавăнтах аслă князь воеводăсене хăш полкра пулмаллине тата Хусана ăçтан-ăçтан каймаллине каласа тухрĕ.

– Эс, княже Михайло Иванович, – терĕ вăл хăйĕн умĕнче тăракан Воротынский патне утса пырса, – пысăк полк воеводи пулатăн. Çулу сан çакăн пек: Мускавран Рязане тухатăн, вара Мещера урлă Сăр шывĕ патне каятăн, ыттисене унта кĕтетĕн. Эсĕ, княже Андрей Михайлович, – Курбский еннелле çаврăнчĕ патша, – Щенятев княçпа пĕрле Сылтăм полка ертсе каятăн. Эсĕ, княже Дмитрий Иванович Плещеев, Сулахай полк воеводи пулатăн. Сана, княже Петр Андреевич, – куçĕпе Булгаков воеводăна шыраса тупрĕ вăл, – юханшыв çинчи çарсене илсе кайма хушатăп. Çарсем, яланхи пекех, Чулхулана пуçтарăнаççĕ. Санпа пĕрле унта Хусан ханĕ Шигалей Шейх Аулиярович пулать. Эсĕ, княже Михайло Яковлевич, – аллине хăйĕн умĕнче тăракан Морозов воевода хулпуççийĕ çине хучĕ аслă князь, – пĕтĕм наряд пуçлăхĕ пулатăн. Сана пулăшма эпĕ хамăн дьяка Иван Григорьевич Выродков розмысела уйăрса паратăп. Эсĕ, княже Горбатый-Шуйский, çул çинче пĕтĕм утлă çара йĕркелесе пыратăн. Патша полкне эпĕ хам илсе каятăп. Ку полкра мана пулăшаканĕ Владимир Иванович Воротынский пулать.

Полксене вăл Сăр шывĕ хĕррине виçĕ çĕртен пырса çитме хăй пайласа тухнă, вĕсем мĕнле хуласем урлă кайса пĕр-пĕринпе ăçта тĕл пулмаллине йăлт палăртса хунă.

– Ĕнтĕ пурне те ĕç парса тухрăм пулмалла, воеводăсем, – терĕ Иван Васильевич çар пуçĕсене ятран асăнса пĕтерни хыççăн. – Сĕве вăрринчен килнĕ темиçе воевода çеç полк илеймерĕ курăнать. Çапла-и, Михайло Иванович?

– Вĕсем валли ĕç тупăнать, – хуравларĕ аслă княçа похода часрах пуçласчĕ тесе васкатма килнĕ Михаил Воротынский воевода.

– Вĕсен çарĕсем Новоград Свияжскинче пире кĕтсе тăраççĕ. Ан хăрăр, Новоград Свияжскинчи воеводăсем, эсир Хусан патĕнче ĕçсĕр юлас çук. Вырăс чиркĕвĕн пуçлăхĕ ячĕпе, митрополит ячĕпе, – кăшт сассине хăпартса пĕлтерчĕ аслă князь, – похода пирĕн духовнăй атте Селиверст священник пырать.

Иван Васильевич священник патне пырса вăл пилленине итлеме хатĕрленсе тăчĕ, ăна хăйĕн вырăнне лартса:

– Селиверст атте, кала, вырăс чиркĕвĕн пуçлăхĕнчен, хамăрăн митрополитран пире валли мĕнле сăмах илсе килтĕн? – тесе ыйтрĕ.

– Митрополит атте, – кĕрлерĕ хулăн сассипе священник, – похода хутшăнакан мĕн пур ратнăй çынсене турă ячĕпе кĕрешĕве кĕме пиллет. Унăн сăмахĕ çакăн пек: турă яланах сирĕнпе пултăр, сирĕн çылăхăрсене каçартăр, хамăрăн христиан тĕнĕн тăшманĕсене аркатса тăкма хăват патăр. Кунсăр пуçне вырăс чиркĕвĕсен пуçлăхĕ сан урлă Сĕве вăрринче тăракан мĕн пур ратнăй çынсене хăйĕн архипастырь саламне ярать, – митрополит шучĕпе, унти воинсен чунĕсем йăлтах çылăха кĕрсе пĕтнĕ, çавăнпа унти çынсем хушшинче чирлисем питĕ нумай. Митрополит вĕсене чир-чĕртен сывалса çитес тесе турра ытларах кĕл тума хушать, вĕсен чунĕсем çитес вăхăтрах çылăхсенчен тасаласса шанса тăрать. Акă эпĕ сана, аслă князь, митрополит çырăвне паратăп.

Священник патшана митрополит çырăвне тыттарчĕ, ăна митрополит ячĕпе ыталаса илчĕ.

Иван Васильевич чунран çуйăнланса каллех сăмах калама тапратрĕ.

– Хаклă хăнасем – патша ывăлĕсем, боярсем, воеводăсем, думнăй çынсемпе пирĕн советниксем! – терĕ вăл. – Темиçе уйăх каярах кăна-ха эпир Хусана пĕр çапăçусăр илме пултараттăмăр, – унта турă ирĕкĕпе шăпах çавăн пек ларутăру пулса тăнăччĕ. Халь ĕнтĕ пирĕн стрелецсен виллисем Булак тĕпĕнче выртаççĕ. Эпĕ хама Христос шанса панă христиансене çапла вĕлернине тек тӳссе тăма пултараймастăп. Эпĕ православи тĕнĕпе таса чиркӳшĕн вăрçа кĕресшĕн, тăшмана хирĕç, таса тĕншĕн юлашки юн тумламĕччен, мĕн сывлăш тухми пуличчен кĕрешесшĕн. Христос турă эпир хăйне мĕнле ĕненнине курса тăтăр, пире хамăр тăшмансене çĕнтерме пулăштăр...

Аслă князь сăмахне пĕтернĕ-пĕтермен кремль картишĕнчи Благовещени соборĕнче чан çапма пуçларĕç. Апатланмалли палатăри мĕн пур чаплă çынсем патша ывăлĕсене сывлăх сунса государьпе ун духовнăй ашшĕ хыççăн касхи кĕлле кайма тухрĕç.

Тукай мăрса Сĕве вăрринчен таврăнсан ниçта тухса çӳремесĕр Çавал тăрăхĕнче пурăнчĕ. Икĕ уйăх вăл платниксемпе, алă ăстисемпе, хăйĕн йышлă тарçисемпе çапăçрĕ. Çĕрĕн-кунĕн ĕçпе чупни, харкашни, платниксене, кăмака ăстисене вĕрентни харама каймарĕ – Çĕрпӳре, Çавал хĕрринче, чул ярса никĕсленĕ пысăк çурт ӳссе те ларчĕ. Чăнах ĕнтĕ, кĕрӳшĕ ку çурта маларахах тума тытăннăччĕ, анчах Тукай мăрса хăй тăрăшман пулсан кунашкал хăвăрт пĕтерейместчĕç-ха ăна тата ун пекех хитре те тăваймастчĕç.

Таврари халăх ку кермен пек çурт çине ăмсанса пăхать: ав мĕн тума пултарать иккен мул, ав мĕн тума пултарать иккен этем алли. Çынсем астăваççĕ, Тукайăн Юмансарти Урасмет çунтарса янă пӳрчĕ те питĕ чаплăччĕ. Кив Тукайри хуралтăсем те начар мар унăн, анчах куна çитме ăçта! Çĕрпӳри пӳрте Хусан улпучĕсен çурчĕсемпе çеç танлаштарма пулать. Чӳречисем тем пысăкăш, кил картине йĕри-тавра хӳме тытса çаврăннă, хапхисене сăрланă, пӳлĕмĕсенче пур çĕрте те вырăсла кăмакасем. Тарçăсем калана тăрăх, вите урайĕсене те хăма сарнă, нӳхрепсене чул купаласа тунă.

– Пире валли хăварнă нӳхрепне те чул купаланă-и? – ыйтаççĕ таврари ял çыннисем тарçăсенчен.

– Чул купаланă. Лекме ан тăрăшăр, шăнса вилетĕр, – асăрхаттараççĕ лешсем.

Çавал хĕррине куçнă Тукай таврари çынсем валли çĕнĕ япала шутласа каларчĕ – кантăрпа курăк хутнăшăн тата пулă тытнăшăн кашни ялтан хырçă пуçтарать.

– Вырăс ĕмпĕвĕ пиртен виçĕ çул хушши хырçă-куланай илмелле мар тунă. Эс ма ун сăмахне пăхăнасшăн мар, Тукай мăрса? – хирĕçлеме пăхаççĕ ясачнăйсем.

– Эпĕ вырăс ĕмпĕвĕ мар, чăваш ĕмпĕвĕ, – тет мăрса. – Манăн кунта хамăн йĕрке.

– Вайпутсене кайса калатпăр сан çинчен, Тукай ĕмпӳ. Вĕсем сана вырăссен сăмахĕнчен тухнăшăн пуçран шăлмĕç, – систереççĕ ял çыннисем.

– Кайса калăр ара, – хуравлать Тукай. – Ман саламата тутанса пăхас тесен чупăр часрах. Воевода кама хирĕç тăратăр тесе лайăх кăна пама хушĕ сире, эпĕ вара çийĕнчен тӳпелĕп...

Таврари халăх пăртак тавлашкалать те, алманчă ялсерен хырçă пуçтарма тытăнать. Мĕн те пулин кирлĕ пулсан çынсем каллех Тукай патнех пыраççĕ. Ăçта кайăн, кама чуху парăн? Воеводăсем аякра. Тата вĕсем тусанлă шлепкесемпе çĕтĕк çăпатасем çине пăхасшăн та мар-çке.

**(Малалли пулать).**



# Хаваслă 2014 самант

## «Ана» пуçватмăш

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |
| | а | н | а | |

Чăваш республикинчи хула. Шупашкарти лавкка. Вĕрен, пăяв. Кăркăссен эпосĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ял. Итали ÿнерçи Тициан ÿкернĕ картина. Тропикри çимĕç. Çĕрпÿ районĕнчи ял. Азербайджанри, Туркмени укçа. Лăпкă океанти Алеут утравĕсенчен пĕри.

**Асăрхаттарни:** хуравсене йĕркипе аялалла çырса анмалла.

## «Ала» пуçватмăш

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |
| | а | л | а | |

Йывăç кĕреçе. Пахчаçимĕç. Хĕçтимĕрĕн тепĕр ячĕ. Кавир. Ĕлĕкхи Раççей кавалерире усă курнă хĕçпăшал. Çырла. Пысăках мар литература хайлавĕ. Кăркăстанри юханшыв. Шыв юхтармалли пăрăх. Индонезири Флорес тинĕсĕнчи утрав.

**Асăрхаттарни:** хуравсене йĕркипе аялалла çырса анмалла.

## «Ака» пуçватмăш

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |
| | а | к | а | |

Вĕçенкайăк. Çурт айĕнчи пахчаçимĕç вырнаçтармалли пÿлĕм. Вутă татнă чух усă куракан хатĕр. Кăнтăрти чĕрчун. С.Аслан çырнă «Ахрат» романĕнчи сăнар. Канаш районĕнчи ял. Техникăра детальсене çирĕплетмелли хатĕр. Сенегал тĕп хули. Челябинск облаçĕнчи хула. Шăккалат йывăççи.

**Асăрхаттарни:** хуравсене йĕркипе аялалла çырса анмалла.

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***

## «Хĕвелçаврăнăш» пуçватмăш




**Сехет йĕппи майлă:** 1. Вĕçет – çил мар, юрлать – çын мар (туп.юм.). 2. Авма пĕлмен ... хуçăлать (ват.сăм.). 3. Хăй шăллă, анчах çыртмасть (туп.юм.). 4. Пиçиххи пайĕ. 5. Пулас болид. 6. Спортсменсен ывăтмалли хатĕрĕ. 7. Чиркÿллĕ ял. 8. Сысна «ачи». 9. Урай сармалли хатĕр. 10. Йăлтăр-йăлтăр тăвать, пĕтĕм хире хирсе тăкать (туп.юм.). 11. Ÿссе çитеймен вăрман. 12. Польша майри. 13. Ăна туй вăхăтĕнче калаççĕ. 14. Америкăри чĕрчун. 15. Куккурус «тăванĕ». 16. Вăйă. 17. ... тата Упа. 18. Раççейри юханшыв. 19. Пуху. 20. Çар техники. 21. Саклат хурса тавлашни. 22. Платникĕн ĕç хатĕрĕ. 23. Шантарса сăмах пани. 24. Курак юлташĕ.

**Сехет йĕппине хирĕç:** 1. Тыткăнри çын. 2. Тинĕс варринче качака путекĕ кăшкăрать (туп.юм.). 3. ...ра çини киле çитмест (каларăш). 4. Ÿсен-тăран пайĕ. 5. Ыраш «тăванĕ». 6. М.Ухсай хайлавĕ – «... çилсем». 7. Якутсем хăйсене çапла калаççĕ. 8. Ту пулса çитеймен-ха. 9. Кĕпе пайĕ. 10. Поселокран пысăкрах. 11. Питĕрмелли хатĕр. 12. Атăл юппи. 13. Хитре кайăк. 14. Индири машина. 15. Тиха евĕр лаша. 16. Мускаври Хĕрлĕ лапама анса ларнă вĕçевçĕ. 17. Кăнтăр Америкăри чĕрчун. 18. Пĕчĕк йытă. 19. Европăри çар альянсĕ. 20. Тăваттăн тÿп-тÿп, хăй пĕччен (туп.юм). 21. Пушă ешчĕк. 22. Падеж. 23. Хиппи, ирокез, ... 24. Уйри вĕçенкайăк.

## Сăмахкаçмăш




1. Çар званийĕ. 2. К.Маркс пуянлăхĕ. 3. Штирлиц рольне вылянă артист. 4. Чăвашсен Кĕлпук мучийĕ. 5. «Лăпкă Дон» роман авторĕ. 6. Тÿпери çăлтăр ушкăнĕ. 7. Авалхи Египетри ăслă патша. 8. Чăваш боксерĕ, Олимп чемпионĕ. 9. Кĕвĕ инструменчĕн пайĕ. 10. «Кĕт мана, эп таврăнатăп» йĕркесен авторĕ. 11. Çĕршыври телекураври «Калаçчăрах» передачăна ертсе пыракан. 12. Г. Жегловăн шанчăклă юлташĕ. 13. Кишĕр çав витаминпа пуян. 14. Инçет хĕвелтухăçĕнчи утрав. 15. Узбекистанри хула. 16. Авиаконструктор та, юрăç-композитор та. 17. Пистолет ăсталакан та, шайба хăвалакан та. 18. Вырăс юрăçи, ытларах романссене кăмăллать. 19. Вăл чылай вăхăт ЧПУ ректорĕ пулнă. 20. Ят-шыв палли. 21. Пожарнăйсен вышки. 22. Чăваш композиторĕсен пуçлăхĕ. 23. Вăл «челюскинецсене» çăлнă. 24. Водород бомбин «ашшĕ». 25. Чăваш юрăçи. 26. Сиен кÿрекен хурт-кăпшанкă. 27. Кăнтăрти йывăç. 28. Тĕнчери пĕрремĕш космонавт. 29. Пушă. 30. Уфари хоккей команди – «...Юлаев». 31. Вырăс çыравçи. 32. Тĕвесен ушкăнĕ. 33. Одиссей ывăлĕ. 34. Таçта мĕн пулнине пĕлекен çын. 35. Вăл çĕршыв старости пулнă. 36. Раççей кĕрешÿçи, виçĕ хут Олимп чемпионĕ.

***Николай КРАСНОВ* (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.****